им. М. Горь...
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЧĂВАШ ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

170 (9849) № | 1956 çулхи августăн 21-мĕшĕ, ытларикун | Хакĕ 20 пус. 39-мĕш çул тухать.

Августăн 20—25-мĕшĕсем—тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕççене вĕçлемелли пилĕккунлăх!

„Правда" хаçат Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçĕн хăвăртлăхне чакарнăшăн тивĕçлипе критиклет. Тырпул тăкăнса пĕтме пултарать, ăна пухса кĕртес тĕлĕшпе нимĕн чухлĕ те тăхтаса тăни пулмалла мар. Тырпул пухса кĕртес ĕçе пĕр кун кая хăварни тата пысăкрах çухатусем патне илсе пыма пултарать. Çанталăк улшăнасса кĕтме çук, тырпула кăнтăрла та, çĕрле те—мĕнпур комбайнсемпе, виндроуэрсемпе, косилкăсемпе, жнейкăсемпе усă курса тата алăпа вырса пухса кĕртмелле. Авăн çапас ĕçе, чи малтан чĕрĕрех тырра çапас ĕçе, организацилемелле. Тырра пăсăлма памалла мар, сушилкăсемпе туллин усă курмалла. Çапнă тырра хранилищесенче, çавăн пекех юрăхлă çуртсенче çӳхе сийĕн сарса усрамалла.

Пилĕк кун хушшинче, иртнĕ пилĕккунлăхрипе танлаштарсан, государствăна тырă парассине икĕ хут ӳстерер, государствăна тырă памалли плана август уйăхĕнче тултарар!

Ставрополь тăрăхĕнчи ĕçченсен хавхалантаракан çĕнтерĕвĕ

«Правда» хаçат августăн 20-мĕшĕнчи умстатьяра çапла çырать:

Енер «Правда» хаçатра Ставрополь тăрăхĕнчи ял ĕçченĕсем чаплă çĕнтерӳ туни çинчен пĕлтерӳпе пичетленсе кăларнă. **Ставрополь крайĕнчи колхозсемпе совхозсем государствăна тырă памалли плана срокчен тултарнă, планран ирттерсе 25 миллион пăт тырă панă. Тăван çĕршыв Ставрополь крайĕнчен 95 миллион пăт тырă илчĕ, вăл шутран тулă 83 миллион пăт. Крайри колхозсемпе совхозсем татах 5 миллион пăт кукуруза, рис тата ытти культурăсен вăрри пама палăртаççĕ. Çапла ĕнтĕ вĕсем пĕтĕмпе 100 миллион пăт тырă параççĕ. Ставрополь крайĕ государствăна çакăн чухлĕ нумай тырă пани халиччен пулман.**

Ставрополь тăрăхĕнчи ĕçченсем тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçре тунă çĕнтерӳ хăй тĕллĕн пулман. Ăна колхозниксем, колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, партипе совет организацийĕсем, ялхуçалăх ĕçченĕсем—крайри мĕнпур ĕçченсем паттăррăн кĕрешнипе çĕнсе илнĕ. Çак çĕнтерӳ çĕнĕрен хăватлă çĕкленӳ туни çинчен калать. Совет çыннисем Коммунистсен партийĕн XX съезчĕн решенийĕсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн, улттăмĕш пилĕк-çуллăх плана срокчен тултарассишĕн ĕçри пысăк çĕкленӗве кĕрешеççĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра Ставрополь крайĕнчи уй-хирте, Казахстанри, Çĕпĕрти, Уралти, Атăл тăрăхĕнчи вĕçĕмсĕр анлă уй-хирсенчи пекех, колхозниксемпе пĕрле рабочи класĕн совет интеллигенцийĕн представителĕсем ĕçленĕ. Тырăшăн, ялхуçалăхне малалла çĕклентерессишĕн кĕрешесси чăннипех пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăчĕ.

Тырă вырма тухас умĕн Ставрополь крайĕнчи ĕçсыннисем тырпул пухса кĕртес ĕçе кăтартуллă ирттерессишĕн, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăрту пуçарса ячĕç. Вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне Ставрополь тăрăхĕнчи ĕçченсем ĕçе пĕлсе организацилеме пултарнине кăтартса пачĕç.

Халĕ ĕнтĕ пӳрте çакна йышăнаççĕ: **тырпула çулса пултарса пухса кĕртесси—тăккаланчăка пĕтермелли шанчăклă май, тырпул туса илессине ӳстермелли паха резерв пулса тăрать.** Анчах та çак прогрессивлă меслетпе чылай çĕрте çаплах анлăн усă курмаççĕ-ха. Ставрополь крайĕнчи ĕçченсем вара мĕнпур ял ĕçченĕсемшĕн паха тĕслĕх кăтартрĕç. Вĕсем çĕнĕ меслетпе 800 пин гектартан кая мар пухса кĕртме сăмах пачĕç. Пысăк та ответлă обязательство! Вĕсем хăйсен обязательствине тултарчĕç кăна мар, ирттерсе тултарчĕç. **Вĕсем çĕнĕ меслетпе миллион гектар çинчи тырпула пухса кĕртрĕç. Çак майпа çĕнĕрен 15 миллион пăт тырă пухса илме пултарнă.**

Тырпула çĕнĕ меслетпе пухса кĕртни тырпул тăккаланса пĕтессине чакарать кăна мар, вăл тырпул пухса кĕртмелли вăхăта кĕскетет, чĕрĕ çанталăкра та тырă вырма май парать. Çулса пăрахнă тата подборщикпа пухса çапнă тырра тепĕр хут тасатма та кирлĕ мар. Çакна пула итем çинче ĕç вăйĕ сахал тухать, çав вăхăтрах государствăна тырă памалли хăвăртлăхсем ӳссе пыраççĕ. Çавăнпа та пĕр ӳстермесĕр çапла калама пулать: **ставропольцесен ăнăçлăхĕ вăл, чи малтан, тырпула çулса пултарса пухса кĕртнинчен килнĕ.**

Крайри парти организацийĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçре çак прогрессивлă меслетпе усă курассишĕн пропаганда сарас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Çакна каласан та çителĕклĕ: комбайн агрегачĕсем çинче 4 пин ытла коммунист ĕçленĕ, вĕсем механизаторсемпе колхозниксен ĕçне çĕнĕлле организациленĕ. **Коммунистсем ĕçре паттăрлăх кăтартнă, вĕсем ĕçе татса паракан чи йывăр участоксенче ĕçленĕ. Парти организацийĕсем пуринчен ытла социализмла обязательствăсене пурнăçласси çине, тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçре юлса пыракансене мала тухма пулăшасси çине, малта пыракансен меслетне мĕнпур ял ĕçченĕсен тивĕçлĕ туса хурасси çине тимлĕ пăхнă.**

Ставрополь крайĕнчи ялхуçалăх работникĕсене хура ăмăртăва çĕршыври миллионшар ял ĕçченĕсем хутшăнчĕç. Çĕпĕр çыннисем, тĕслĕхрен, «государствăна миллиард пăт тырă пама йышăннă. Вĕсем хыççăн Казахстан ялхуçалăх ĕçченĕсем çакăн пекех пысăк обязательство йышăнчĕç. Вĕсен çакăн пек обязательство йышăнма сăлтавĕ пур. Çĕпĕрте тата Казахстанра тырă чаплă пулчĕ, çак районсене техника та сахал мар тăратнă, вĕсене хула вăхăтра пулăшу пачĕ. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм ĕç çакăнта: çак мĕнпур майсемпе пĕлсе усă курмалла, тырă вырас тата государствăна тырă парас ĕçсене ӳссе пыракан хăвăртлăхсемпе туса пымалла.

Çĕпĕрти, Казахстанри, Уралти нумай районсенче тырпул тухăçлăхĕ малтан шутланинчен чылай пысăкрах пулнă. Çакă вăл йышăннă обязательствăсене çĕнĕрен пăхса тухма май пачĕ. **Алтай крайĕнчи ял ĕçченĕсем малтанхи государствăна 300 миллион пăт тырă пама тата сутма планланă. «Тăван çĕршыва 350 миллион пăт Алтай тыррине паратпăр!»** — крайри мĕнпур колхозсенче, МТС-сенче, совхозсенче ăмăрту халĕ çак лозунгпа пырать.

Красноярск крайĕнчи, Новосибирск, Саратов, Тюмень, Кемерово тата Курган облаçĕсенчи уй-хир ĕçченĕсем те çавăн пекех çĕнĕ, пысăкрах обязательствăсем йышăннă. Çак патриотла пуçарăва халĕ ĕнтĕ уй-хирсемпе итемсем çинче, элеваторсемпе тырă йышăнмалли пунктсенче—тырпул фрончĕн мĕнпур участокĕсенче организаторла ĕçе лайăх йĕркеленипе вăйлатса пымалла. Обязательствăсене большевикла ĕçсемпе çирĕплетмелле, вĕсене пурнăçлассишĕн Ставрополь тăрăхĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем кĕрешнĕ пек пĕтĕм вăй хурса кĕрешмелле.

Уй-хирсенчи килекен хыпарсем çакăн çинчен калаççĕ: тырпул пухса кĕртес ĕç ăстисен йышĕ куллен-кун ӳссе пырать. Малта пыракан пиншер комбайнерсем, машинистсем, шоферсем техникăна пĕлсе усă кураççĕ, производство заданийĕсене кашни кун тултараççĕ. Алтай çоçенхирĕнче хăйсен ĕçĕпе Белоглазовски районти механизаторсем И. П. Батюк, М. П. Бунин, А. В. Климов юлташсем чапа тухнă. Вĕсем пĕр-пĕрине ылмашăнса ĕçлесе «Молодая гвардия» колхозра талăкра 76-шар гектар тырă выраççĕ. Тырри тата мĕн пек ăнса пулнă? Гектартан 140—150 пăт тухать.

Кустанай облаçĕнчи Чернышевский ячĕпе тăракан совхоз комбайнерĕ Андрей Васильев икĕ комбайн кăкарса ĕçлесе кунне 70—80-шар гектар çинчи вăйлă пулнă тырра пухса кĕртет. Омск облаçĕнчи Ново-Санжаровски МТС-ра лафетлă жнейкăна ĕçлекен машинист Димитрий Масловцев талăкра хăйĕн машинипе 54 гектар çинчи тырпула пухса кĕртет. Кокчетав облаçĕнчи «Бостандыкский» совхозра ĕçлекен улăшкине арăмĕ Сергейпе Нина Лесковсем кашни кун 46-шар гектар тырă выраççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçре çакăн пек ăстасем кашни облаçра, кашни районта пур. Çавсем вĕсем тырпул пухса кĕртмелли срока чакарма, тырă тăкăнса юлассине пĕтерме МТС-сенче, колхозсенче, совхозсенче пысăк майсем пурри çинчен калаççĕ.

Çакăнпа пĕрлех çакна та палăртмасăр иртме çук: **нумай облаçсенче, крайсенче, республикăсенче машинăсен тухăçлăхĕ çаплах ытла та пĕчĕкнĕ.** Уйрăм мастерсен рекорчĕсем вăл е ку МТС-ри, вăл е ку совхозри вуншар механизаторсем пĕчĕк тухăçлăхпа ĕçленине витме пултараймаççĕ. Шăпах та механизаторсен тĕп масси ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулнăран ĕнтĕ август уйăхĕн виççĕмĕш пилĕккунлăхĕнче Киров, Балашов, Ульяновск, Чкалов облаçĕсенче, Чăваш, Удмурт, Пушкăрт автономиллĕ республикисенче тырпул пухса кĕртес ĕçĕн хăвăртлăхĕ чакнă.

Казахстанри чылай районсенче те машинăсен тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Пурте пĕлеççĕ, Кокчетав облаçĕнчи совхозсем вăйлă тырпул çитĕнтерчĕç. Вырмăн тырă—пулмери тырă мар-ха. Ăна пухса кĕртес пулать, тăкăнма парас пулмасть, хатĕрлев пункчĕсене вăхăтра леçес пулать. Çав вăхăтрах кунта тырпул пухса кĕртес ĕçе çителĕксĕр организациленĕ.

Вырса пустарнă тырпул çине тимсĕр пăхни те сисĕнет. Çав Кокчетав облаçĕнчех элеваторсем патне пыракан çулсем çинче шап-шурă тырă выртать, хуть те кĕреçепе ăсса ил. Тырă вăл пирĕн пуянлăх, халăх пуянлăхĕ. Ăна кашни совет çыннин куç шăрçине сыхланă пек сыхлас пулать.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре татăклă тапхăр çитсе тăчĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах общество вылăхĕсем валли апат хатĕрлес ĕç пырать, кĕраки вăйланать. Ĕç пысăкăшĕ чакмасть, кунтан-кун ӳссе пырать. Тырпула ăнăçлă пухса кĕртес тесен, чи малтан, техникăна тухăçлă усă курас пулать, çынсене ĕçе татса паракан участоксем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухас пулать, кашни механизатор тата колхозник сменăри нормăна тултармалла тăвас пулать.

Колхоз ĕçченĕсен тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕççене ăнăçлă вĕçлеме пур условисем те пур. Çакăн çинчен калать ставропольцесен мухтавлă çĕнтерĕвĕ. Вĕсем Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслă пурнăçларĕç; хăйсем валли вăрăх çителĕклĕ хатĕрлерĕç, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырă параççĕ. Юлташсем—ял ĕçченĕсем, ставропольцесемпе танлашăр, тырпул пухса кĕртес ĕçе хăвăртрах ирттерессишĕн, государствăна тырă памалли плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлăрах сарăр!

Государствăна—çĕрулми

ЧУРАЧĂК, августăн 17-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал ир пулакан «эпрон» сортлă çĕрулмине лайăх пăхса çитĕнтерчĕç. Халĕ вĕсем ăна кăларса государствăна пама тытăнчĕç. Колхоз августăн 16-мĕшĕ тĕлне обязательнăй йĕркепе государствăна чылай çĕрулми леçсе пачĕ, - республикăра пĕррemĕш квитанци илчĕ.

М. ЛАНДЫШ.

200 ТОННА ÇАПНĂ

СОВЕТСКИ. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тырпула кĕске вăхăтра пухса кĕртрĕç. Халĕ вĕсем авăн çапаççĕ.

Колхозра МТС-ăн «МК-1100» молотилки ĕçлет. Ф. Исаев машиновед ăна талăкĕпех ĕçлеттерет, 25—30-шар тонна тырă çапса парать. Вăл машинăна лайăх юсаса хатĕрленĕ, ĕçленĕ вăхăтра та техника тĕлĕшĕнчен пăхсах тăрать. Çавăнпа та машина вырăнсăр чарăнса ларни пулман.

Исаев юлташ колхоза кĕске вăхăтрах 200 тонна ытла тырă çапса пачĕ. 2-мĕш бригадăра ыраш гектартан 16,5 центнер, çавăн чухлех çурхи тулă тухнă. Çурхи тулă тухăçлăхĕ 4-мĕш бригадăра та пысăк.

Колхоз хатĕрлев пунктне кашни кунах паха тырă леçсе парать. Купна пĕрлех 400 гектар çине акма кĕртырри вăрлăхĕсем хатĕрленĕ, колхозниксене аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ пуçне 1,5-шер килограмм тырă валеçсе панă.

Я. СИГАЕВ.

ЫРАШ АКАÇÇĔ

ЕЛЧĔК. (Телефонпа, хамăр корр.). Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз ĕçченĕсем кăçал тухăçлă тырпул туса илчĕç. Кашни гектартан 17-шер центнер ыраш тухать.

Колхоз кăçал 412 гектар кĕрхи тырăсем акса хăварать. Çак кунсенче кунта ыраш акма тытăнчĕç. П. Самаринпа М. Сапожников механизаторсем трактор çумне виçĕ сеялка кăкарса ĕçлеççĕ. Сапожников юлташ ыраша акăр ретлĕ майпа акать. Çак меслетпе артель кăçал 270 гектар ыраш акма палăртнă.

Акас умĕн вăрлăха меркуран препаратпа чӳхеççĕ. Ыраш акмалли лаптăксем çине вырăнти удобренисем нумай кăларнă. Калча шăтса тухсан ăна самолет çинчен минераллă удобренисемпе апатлантараççĕ.

Етĕрне районĕ тырă памалли плана тултарнă

Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнса, Етĕрне районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли плана срокчен, августăн 20-мĕшĕнче, 101,7 процент тултарчĕç.

Государствăна тырă парас ĕç малалла пырать.

КПСС райкомĕн секретарĕ И. ИВАНОВ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ Я. МАКЛАШКИН.

МТС директорĕ С. НАУМОВ.

Итем çинче

ТĂВАЙ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз итемĕ çинче двигатель тата молотилкăсем шавлани кунĕпех илтĕнсе тăрать. Кунта хĕрӳ ĕç вĕрет, пĕр çын та ахаль тăнине курайман.

Двигатель умĕнче—механик Алексей Разин. Хăватлă машина мĕнле ĕçлесси механикăн çаврăнăçулăхĕпе пултарулăхĕнчен килет. Двигатель улттă лашапа ĕçлемелли икĕ молотилкăна пĕр харăсах çаврттарать. Кĕлте яраса кăна ĕлкĕр!

Зоя Гладковăпа Зинаида Рузавина барабанщицăсем хăйсен ĕçне пысăк пултарулăхпа пурнăçласа пыраççĕ.

Улăм йăтас, тырă сортлас ĕçсенче Клавдия Цветкова, Августина Иванова, Раиса Максимова, Марфа Герасимова, Валентина Петрова, комсомол организацийĕн секретарĕ Галина Иванова чунтан-чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ.

— Икĕ молотилкăпа, кунсерен 15 сехет таран ĕçлесе, 150 центнертан кая мар тырă çапатпăр,—тет 3-мĕш бригадăн бригадирĕ А. Степанов.

— 700 центнер ытла тырă çапса хатĕрлев пунктне леçрĕмĕр,—пĕлтерет колхоз председателĕ Н. Табаков юлташ.

Г. МАТВЕЕВ.



Элĕк районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз хирĕнче комбайнпа кукуруза пухса кĕртеççĕ. Н. Орлов фотоӳкерчĕкĕ.

Ĕçри хастарлăх

ЧУРАЧĂК. «Победа» колхозри уй-хир бригадисем хушшинче ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлессишĕн ăмăрту пырать. Артель ĕçченĕсем тырпула хăвăрт, тăкаксем тумасăр пухса кĕртессишĕн, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татассишĕн мĕнпур вăйа хурса кĕрешеççĕ.

Уй-хир ĕçĕсене пысăк хăвăртлăхпа туса пыма кăçал çанталăк йĕпе-сапа тăни чылай чăрмантарать. Анчах «Победа» колхоз членĕсем уй-хирти ĕçсене кирек епле çанталăкра та ăнăçлă туса пыраççĕ, кашни сехетне туллин усă курма, тухăçлă ĕçлеме тăрăшаççĕ. Колхозниксем тырпула пухса кĕртес ĕçе ирттерсе туса хатĕрленĕ плана лайăх пурнăçласа пыраççĕ.

А. Архипов юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада членĕсем колхоз правленийĕне пуçламăш парторганизаци куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Çак бригада ĕçченĕсем кĕрхи тырăсене пуринчен малтан, уйтă кун хушшинче вырса пухрĕç, уя тухнă хыççăн виç-тăватă кунтанах авăн çапма тытăнчĕç. Халĕ бригадăра МТС-ăн «МК-1100» молотилкине кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Августăн 10-мĕшĕ тĕлне ыраш çапса пĕтерчĕ. Кĕрхи тырăсем кашни гектартан вăтам шутпа 13-шер центнер тухни палăрать.

Итем çинчи ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ, колхозниксем çапса тĕшĕленĕ тырра вăхăтра сортласа тасатаççĕ.

Г. Григорьев машинист сложнăй молотилкăна сменăра ялан 9—10-шар тонна тырă çапса тĕшĕлет.

Колхоз кашни кунах государствăн хатĕрлев пункчĕсене тырă леçсе тăрать. В. Александров шофер Çĕрпӳ станцине куллен 2—3 рейс туса, 45—70 центнер тырă турттарать. Артель членĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана срокчен тултарнă, халĕ машина-трактор станцийĕ ĕçлесе панăшăн натурăпа тата шучĕпе тата закуп йĕркипе тырă леçеççĕ.

Апла пулин те «Победа» колхозра пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртмалла. Тырпул пухса кĕртес, уйрăмах авăн çапас енĕпе 1-мĕшпе 2-мĕш уй-хир бригадисенче ĕçсем кирлĕ хăвăртлăхпа пулса пымаççĕ. Çак бригадăсенче ыраш çапса пĕтермен. Мĕнпур майсем пур çинчех çĕрле авăн çапасçине йĕркелемеççĕ.

Тырă тăкăнать, машинăсем ванаççĕ

«КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ» СЕНТЕР РАЙОНĔНЧЕ

Кăçал Сĕнтĕр районĕ тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене пĕлтĕрхинчен ăнăçлăрах туса пырать. Çапах та çак ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Уйрăм колхозсенче уй-хир ĕçĕсене сӳрĕккĕн туса пыраççĕ, пысăк тăкаксем тăваççĕ, государствăна тырă парас ĕçе вăраха яраççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре уйрăмах Лысенко ячĕпе тăракан колхоз пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ. Сăлтавĕ акă мĕнре. Колхозра ĕç дисциплини хавшак. Артель правленийĕ (председателĕ Карабаев юлташ) çак çитменлĕхе пĕтерес, вăйпитти колхозниксене пурне те уй-хир ĕçне активлăн хутшăнтарас тĕлĕшпе вăхăтра тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Çавна пула ыраш вырасси вăраха тăсăлнă. Артель суртрисем вырма вăхăтра тытăнайман. Колхоз кăçал 131 гектар çурхи тулă акнă. Августăн 16-мĕшĕ тĕлне тулла çурри те вырман. Пулса çитнĕ хыççăн нумай вăхăт хушши хирте ларнăскер ытлашши хăрса кайнă, талкишпех тăкăнма тытăннă.

Ку колхоза МТС ятарласа пĕр комбайн уйăрса панă. Анчах вăл тухăçсăр ĕçлет, час-часах çĕмĕрлет. Виçĕ эрне хушшинче Пузырев комбайнер унпа 65 гектар çеç вырса çапнă. Çитменнипе тата вăл тырра питĕ япăх вырать. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çакă палăрчĕ: комбайнпа вырнă тулă участокĕнче кашни тăваткал метрта 20—24 пучах тăкăнса юлнă. Пучахсене никам та пуçтармасть. Ăна çинче тулă пĕрчисем те нумай тăкăннă. Колхозăн сĕлĕ 195 гектар. Ăна вырма тытăнман. Сĕлли çурма каюллă пулнă. Малтан шăтса тухни шап-шурах, вăл тăкăнса ларать. Кайран шăтни симĕс, часах пулса çитес çук. Кунта сĕлле каю пулса çитсен тин вырма шутлаççĕ. Çакна тĕрĕс теме çук. Каю пуласса кĕтсе пурăнсан, малтан шăтни пĕтĕмпех ана çине тăкăнса юлать, колхоз каллех тырă нумай çухатма пултарать.

Артель Тăван çĕршыв умĕнчи чи пирвайхи тивĕçе те начар пурнăçласа пырать. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 36 процент çеç тултарнă.

Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçре кӳршĕри «Гигант» колхоз та юлса пырать. Çав вăхăтрах августăн 16-мĕшĕнче 2-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ Янгаров, никамран ыйтмасăрах, 17 колхозника хăйсем валли анкка ĕçлеме кăларса янă. Колхозниксенчен чылайăшĕ колхоз ĕçне пăрахсах харпăр хăй валли хăмăл çулса çӳреççĕ.

«Передовик» колхоз тырă вырас енĕпе районта малти ретре шутланать. Вăл тырра тăвата пайĕнчен виçĕ пайне ытларах вырса пуçтарнă. Анчах государствăна тырă памалли плана 38 процент чухлĕ çеç тултарнă. Ку колхозра та çурхи тулăна вăхăтра вырма тытăнман. Малтан тулăна алăпа вырттарнă. Тăкăнма тытăнсан, артель правленийĕ, ĕçе хăвăртлатас тесе, комбайнпа вырттарса çаптарма йышăннă. Кожаков комбайнер икĕ кун хушшинче 24 гектартан çуррине кăна вырса çапнă. Кайран комбайнĕ ванса кайнă. Тырă ăна-кăна кĕтмест, вăл тăкăнать те тăкăнать. Çак сăлтава пула колхоз тырă чылай çухатать. Шутласа пăхнă тăрăх, вăхăтра вырса пуçтарайман пирки 24 гектар çинче сахалтан та 200—250 пăт тырă хире тăкăнса юлать.

1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхозра виндроуэрпа пурĕ 35 гектар ыраш вырнă пулнă. Анчах МТС айăпĕпе 3 гектар çинчи тырра халĕ те пуçтарса кĕртмен. Çанталăк йĕпе-сапа тăнă пирки вăл пăсăлса кайнă.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе «Колос», «Путь Ильича», Ленин ячĕпе тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче те япăх йĕркеленĕ. Государствăна тырă срокчен парса татас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене уйрăмах «Новая Юнга», «Новая жизнь» тата 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхозсем начар пурнăçласа пыраççĕ. «Новая Юнга» колхоз (председателĕ Федоров юлташ) тырă памалли плана 18 процент çеç тултарнă.

МТС руководителĕсем уйрăм колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕç вăраха кайнине техника çителĕксĕррипе ăнлантарма пăхаççĕ. Çав вăхăтрах комбайнсемпе молотилкăсене тухăçлă ĕçлеттерессишĕн сахал тăрăшаççĕ. Кăçал МТС-ăн пĕтĕмпе 3.700 гектар çинчи тырра вырса çапмалла. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне комбайнсемпе 1.861 гектар кăна вырса пухнă. Вăтам шутпа кашни комбайн пуçне 116 гектар кăна шутланать. Тырра вырса пултарса пухса кĕртмелли задание 34 процент, авăн çапмалли плана 26,6 процент çеç тултарнă.

Уйрăм комбайнерсемпе машиноведсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ваныров комбайнер виçĕ эрне хушшинче пĕтĕмпе 240 гектар тырă вырса çапнă. Пихтеров машиновед сложнăй молотилкăпа 210 тонна çапнă. Анчах МТС дирекцийĕне парт-бюро малта пыракан механизаторсен опытне сарас, сменăри заданисене тултарассишĕн мĕнпур комбайнерсемпе машиноведсене ăмăртăва активлăн явăстарас тĕлĕшпе организаторла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Абросеев машиноведпа Бычков трактористсем малтан пуçласах «Передовик» колхозра ĕçлеççĕ. Вĕсем «МК-1100» молотилкăпа августăн 16-мĕшĕ тĕлне 70 тонна кăна çапнă. Артель правленийĕ молотилкăна пĕрмай вырăнтан-вырăна куçарттарать. Çапасса пĕр сменăпа кăна çапаççĕ. Çавăнпа та ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Абросеев юлташ нимĕнле обязательство та йышăнман. Машиноведсен ăмăртăвĕнче хăй мнçемĕш вырăн йышăнни çинчен пачах пĕлмест.

— Кăçал эпĕ обязательство пама пултараймастăп,—тет вăл.—Мĕншĕн тесен икĕ колхозран пĕри çеç авăн çаптарма МТС-па договор тунă. Урăх колхозсене ĕçлеме мана те яраççĕ, те яраççĕ, ăна-кăна пĕлместĕп.

Абросеев машиноведăн ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Анчах вăл малашнехи ĕçсем çинчен нимĕн калама пултараймасть. Мĕншĕн тесен МТС руководителĕсенчен никам та унпа уйрăммăн калаçман. Çак колхозра МТС директорĕ Кушников юлташ молотилкăна ĕçе янă чухне пулнă та урăх пĕртте пырса курман. Колхозсемпе трактор бригадисенче тăтăшах пулман пирки вăл агрегатсем мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн пĕлмест. Ахальтен мар ĕнтĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçĕн пахалăхĕ çинчен калаçа пама ыйтсан, МТС директорĕ ответ парассинчен пăрăнчĕ.

— Ун çинчен главнăй агрономран ыйтас пулать,—терĕ вăл. Çавăнтах хăйĕн кабинетне Филиппов юлташа чĕнсе илчĕ. Директорăн главнăй агрономе ответлерĕ. МТС-ăн главнăй агрономĕ Филиппов юлташ колхозсенче тырпула тăккалани пирки каймасть тесе ĕнентерме тăрăшрĕ. Пирĕнтен ик-виçĕ кун каярах вăл Лысенко ячĕпе тăракан колхозра пулнă. Анчах комбайн ĕçлекен участокра кашни гектара 4—5 центнер таран тырă тăкăнса юлнине пачах «асăрхаман».

Колхозсемпе МТС-ăн ĕçĕнчи çитменлĕхсем акă мĕнрен килеççĕ. Районти руководительсем организаторла чĕрĕ ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Кашни колхозра, уй-хир тата трактор бригадинче ĕçсем мĕнле пынине куллен çирĕп сăнаса тăмаççĕ, вырăнти çитменлĕхсене вăхăтра асăрхаса, вĕсене сиенсĕр пĕтерессишĕн çителĕклĕ таран тăрăшмаççĕ. Çавăнпа та Сĕнтĕр районĕ тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçре кӳршĕри Советски тата Муркаш районĕсенчен юлса пырать.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат бригади:
Н. БОРЗАЕВ, С. ГОРЛАНОВ, П. ПАВЛОВ.

Массăпа тачă çыхăнса

Ĕçри анăçлăх, пуринчен малтан, массăсемпе çирĕп çыхăнса ĕçленинчен, политикăлла-массăллă ĕçе умра тăракан практикăлла задачăсемпе тачă çыхăнтарса туса пынинчен килет. Çавăнпа та пирĕн колхозри парторганизаци колхозниксен анлă массине куллен ĕçлесси çине плана тимлĕ пăхать, партиллĕ-политикăлла тата организаторла ĕçе вăйлатса пынă ниĕçе çине колхозниксен ĕçри активлăхне ÿстерсе ырать. Çавна пула колхозри ĕçсем те ăçлă пулса пыраççĕ.

Артель членĕсем тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме, государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçлама сăмах пачĕç. Парторганизаци артель правленийĕпе пĕрле панă сăмаха чыслăн пурнăçласшăн тăтăклă решу пуçарчĕ. Колхоз тырпул пухса ертме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе ерĕ. Малтанхи кунсенчех уй-хир бригадисемпе колхозниксем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса ятăмăр. Парторганизаци пĕтĕм политикăлла-массăлла ĕçе уй-хире, итемсем çине, транспорт бригадине куçарчĕ. Уй-хир бригадинче боевой листоксем кăларассине, хаçат-журналсем вуласа парассине йĕркелерĕ. Агитаторсем колхозниксем хушшинче тăшах калаçусем ирттереççĕ, малта пыракан колхозниксен ĕç опытне мĕнпур колхозниксем хушшинче сарма пулăшаççĕ. Пĕр-пĕрне ăмăртса ĕçлесе, колхозникпе колхозницăсем тырă вырнă çĕрте кăлнехи заданисене ирттерсе тултарса пычĕç. Колхоз ырăша ултă ĕç кунĕ хушшинче вырса пĕтерчĕ.

Тырă вырма тытăнни хыççăнах парторганизаци государствăна тырă парас ĕçе çарса ячĕ. П. Михайлов агитатор пуçарнипе шоферсем хушшинче хатĕрлев пунктне тырă хăвăртрах леçсе парассишĕн ăмăрту сарăлчĕ. Вĕсем кунсерен иккĕшер рейс тăвĕç, графика ирттерсе тултарса пычĕç. Авăн çапас, тырă сăвăрса тасатас тата типĕтес ĕçсене те лайăх йĕркелерĕмĕр. Артель членĕсем хастарлă ĕçленине пула колхоз обязательнăй йĕркепе тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе тырă памалли плана августăн 14-мĕшĕ тĕлне, пĕлтĕрхинчен икĕ эрне малтарах тултарчĕ. Хатĕрлев пунктне пĕтĕмпе 1.108 центнер паха тырă леçсе панă. Халĕ колхоз государствăна закуп шучĕпе тырă сутать.

Эпир малтанхи çитĕнÿсемпе лăпланса лармастпăр. Парторганизацине артель правленийĕ тырăшăн пыракан кĕрешĕве вăйлатса пыраççĕ. Халĕ колхозниксем çуртри ырас тата ыраш кĕлтисене хирти кÿрсе капана хывас ĕçсене çак кунсенче вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Авăн çапассине те хăвăртлатсах ыратпăр. Ку тĕлĕшпе уйрăмах 1-мĕшпе 3-мĕш уй-хир бригадисем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Парторганизацине массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетни колхозра строительство ĕçне те анлă сарса има май пачĕ. Артель членĕсем строительство материалĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе хастар ĕçлерĕç. Строительсем çитес кунсенче типовой проект тăрăх 100 пуç вырнаçмалăх сысна вити, 40 пуç вырнаçмалăх ĕне вити тата чăх-чĕп вити туса пĕтереççĕ. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх витисене пĕтĕмпех хĕле хатĕрлесе çитеретпĕр.

С. ПАВЛОВ.

Муркаш районĕнчи «Герой» колхозри парторганизаци секретарĕ.

УЧЕНĂЙ СОВЕТСЕН ЛАРĂВĔНЧЕ

Августăн 17-мĕшĕнче Чăваш чĕлхе, литература, истори тата экономика наукăпа тĕпчев институчĕн тата Чăваш АССР Краеведени музейĕн ученăй совечĕсен ларăвĕ пулчĕ.

Ученăй советсен ларăвĕ наукăпа тĕпчев институчĕ Октябрьти Социализмла Аслă революци 40 çул тултарнă тĕле тумалли ĕçсен планне пăхса тухса çирĕплетрĕ. Аслă революци 40 çул тултарнă май чылай кĕнекесем çырса пичетлесе кăларма палăртнă. Çав кĕнекесенче Чăваш çĕршывĕнче социализмла революци çĕнтерĕ кунсенчи ĕçсем çинчен тата чăваш халăхĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тунă çитĕнÿсем çинчен каласа памалла. Урăх ячĕпе наукăлла сесси ирттерме йышăннă.

Ученăй советсен ларăвĕ çавăн пекех чăвашла сăвă çырасси тата стилистика çинчен çырнă статьясен пуххине пичетлесе кăларма çирĕплетрĕ. Статьясен пуххине наукăпа тĕпчев институчĕн чĕлхепе литература секторĕ хатĕрленĕ.

Ларура кăçал хамăр республикăра ирттерĕ археологи экспедицийĕн ĕçĕсем çинчен тунă докладпа содокладсем пысăк ырăн йышăнчĕç.

Археологи экспедицине Чăваш чĕлхе, литература, истори тата экономика наукăпа тĕпчев институчĕ организациленĕ. Ку ĕçе хамăр республикăри краеведени музейĕ тата СССР Наукăсен академийĕн материальнăй культура историйĕн институчĕ хутшăннă.

Археологи экспедицийĕн начальникĕ истори наукисен докторĕ А. П. Смирнов профессор, экспедици 1-мĕш отрядне ертсе пынă аспирант Г. А. Федоров-Давыдов, 2-мĕш отряда ертсе пынă истори наукисен кандидачĕ Н. В. Трубникова экспедици ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç. Экспедици Чкаловски, Элĕк, Красноармейски районĕсенче авалхи çынсен пурăннă тата авалхи çынсене пытарнă вырăнсене чавса пăхса истори наукишĕн паха, чăваш халăхĕн историне тĕпчесе вĕренме пулăшакан япаласем чылай тупнă. Çав япаласене усрама Чăваш АССР краеведени музейне параççĕ.

Археологи экспедицийĕн ĕçĕсем çинчен тунă докладпа содокладсене ученăй советсен членĕсемпе пĕрле писательсем, институтсенчи работниксемпе преподавательсем тата республикăри шкулсенчи истори учителĕсем (вĕсем Шупашкара семинара килнĕ) интересленсе итлерĕç.

Ларура экспедици ĕçĕсем çинчен истори наукисен кандидачĕсем В. Каховский тата В. Дмитриев юлташсем тухса каларĕç. Ученăй советсен ларăвĕ археологи экспедицийĕн ĕçĕсене ырларĕ, килес çул ку ĕçе малалла тăсма кирлĕ, тесе йышăнчĕ.

Малта пыракан рабочисем парти ретне кĕреççĕ

КПСС XX съезчĕ кăтартса хăварнисене тăва илсе, пирĕн фабрикăри парторганизаци массăсемпе тачăрах çыхăнса ĕçлеме пуçларĕ. Çакна пуçламăш парторганизаци лайăх рабочисен шучĕпе ÿссе пыни çирĕплетсе парать.

Иртнĕ çичĕ уйăхра парти ретне 7 çын илнĕ, халĕ тата виçĕ çын партие кĕме йĕркеленеççĕ.

Пирĕн мухтавлă коммунистсен партийĕне кĕме тивĕçлĕ пулнă рабочисем производствăра малта пыраççĕ, коллективра пысăк авторитетпа усă кураççĕ. Вĕсем общественăлла ĕçсене активлă хутшăнаççĕ, вĕсен производствăри ăсталăхне, политикăлла пĕлĕвне пĕрмай ÿстереççĕ. Сновальщица М. Матвеева юлташ вăйсăмĕш ĕнтĕ хăйĕн производствăри пултарулăхне кăтартать. Нормăна тĕмисе хут ирттерсе тултарнăшăн тата ĕç пăхалăхне лайăхлатса пынăшăн унăн ятне тĕмисе те фабрикăри Хисеп хăмине кĕнеки те çырса хунă. Хастарлă работница ĕн квалификацине ÿстерме нумай вăй ĕ. Вăл производствăран уйрăлмасăр ĕнь пир-авăр техникумĕнчен ăнăçлă ĕнсе тухрĕ.

А. Кузнецов юлташ Совет Çарне кайиччен фабрикăра слесарь пулса ĕçленĕ. ... гражданинĕн чи хисеплĕ тивĕçне пурнăçланă хыççăн, вăл каллех фабрикăна таврăнчĕ. Часах пултаруллă та пуçаруллă рабочие мастер помощникĕ тăвĕç. Çамрăк коммунист общественăлла ĕçе активлă хутшăнать. Вăл комсомол комитечĕн членĕ, физкультурăпа спорт ĕçне аста йĕркелет.

Парти членĕн кандидачĕ В. Крюков юлташ батанщиксен бригадирĕ пулса ĕçлет. Вăл фабрикăри чи активлă рационализаторсенчен пĕри. Коммунист пĕтĕмпе вунă рационализаторла сĕнÿ ытла тăратнă. Малтан батаннăй мастерскойра пĕтĕм ĕçе ал вĕççĕн туса пынă пулнă. Рационализатор сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртни мастерскойри мĕнпур ĕçе механизацилеме май панă.

Çамрăк коммунистсенчен мастер помощникĕ А. Лесков, смена мастерĕ В. Ведина юлташсем кăтартуллăн ĕçленине палăртмалла. Вĕсем хăйсен производствăри ăсталăхне куллен-кун лайăхлатса пыраççĕ. Ведина юлташ кăçал В. И. Ленин биографине вĕренмелли кружокăн руководителĕ пулса ĕçлеме çирĕпленчĕ.

Фабрикăри партбюро коммунистсене, уйрăмах çамрăк коммунистсене воспитани парас, вĕсен авангардлă рольне ÿстерес енĕпе ытларах ĕçлеме пуçларĕ. Коммунистсем хăйсен ырă примерĕпе мĕнпур рабочисемпе работницăсене ĕçре хавхалантарса пыраççĕ. Фабрика коллективĕ иртнĕ çичĕ уйăхри производство планне 103,4 процент тултарчĕ.

А. ПАВЛОВ.

Шупашкарти лента тĕртекен фабрикăри партбюро секретарĕ.

ПЕРЕСКАЗ: Хатĕрлев пунктĕнче

РЕПОРТАЖ

Хатĕрлев пунктĕнче

Çак кунсенче Канашри çулсем тăрăх автомашинăсемпе лавсем вĕçĕ-хĕррисĕр иртсе çÿреççĕ. Пурин çинче те тулли михĕсем. Пурте «Заготзерно» пунктне васкаççĕ. Кашни колхоз государство умĕнчи пĕррремĕш тивĕçе—тырă памалли плана срокчен тултарма тăрăшать.

Кунти хатĕрлев пункчĕ вунă районти колхозсенчен тырă йышăнать. Кулленех иккĕре яхăн автомашина, çĕршер лав килсе тăрать. Шутласан, тырă пама килсен виçĕ кунсăр та пушанса каяс çук темелле. Иртнĕ çулсенче, чăн та, колхозниксем пунктра тырă йышăнасса нумай вăхăт хушши кĕтнĕ, тепĕр чухне Канашрах çĕр выртнă. Кăçал вара пачах урăхла: кашни автомашина 6—7 минут хушшинче пушанса тухать. Хатĕрлев пунктĕнче ĕçе тĕрĕс организациленĕ: тырă пушатас тата куçарас ĕçсене механизациленĕ май, колхозсенчен тырă йышăнасси питĕ хăвăрт пулса пырать.

Акă, автомашинăсене турттармалли тараса çине тулли машина кĕрсе тăрать. Пĕр минут та вăхăт иртмест — вăл мĕн чухлĕ турттине виçсе илеççĕ те. Тараса умĕнчех складсен заведующийĕсем. Хăйĕн склачĕсене кĕрекен тырра кашни заведующи хăй виçсе йышăнать. Тараса çинче пĕр сехетре 50—60 автомашина турттарма ĕлкĕреççĕ.

Тараса витĕр тухсан, автомашина склада тырă пушатма кĕрет. Складсенче пĕр хушăрах вуникĕ автомашина тырă пушатма пултарать. Кунта ĕçе çапла йĕркеленĕ: автомашина склада кĕрет çеç, михĕсенчи тырра тÿрех, купов çинченех, урайĕнчи шăтăка тăкаççĕ. Тырра механизациленĕ транспортер склада куçарса тăрать. Амбарта икĕ вырăна автоподъемниксем лартнă. Тырă тиесе килнĕ автомашинăсем пĕрикĕ минутрах пушанса та тухаççĕ. Эпир пăхса тăнă вăхăтра пĕр самантрах Елчĕк районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, «Социализм», Тăвай районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхозсем ыраш, Шăхасан районĕнчи «Молодой колхозник» колхозран тулă пушатса та тухрĕç.

Хатĕрлев пунктĕнчи площадкăра — тĕрлĕрен тырă тасатмалли, сортламалли машинăсем: «ОС-3», «ОС-10», «СБ-10», «Клейтон» маркăлла веялкăсене алăпа çавăрса ĕçлеттермелле. Кунти механиксем çак машинăсене те электричество вăйĕпе ĕçлеттермелле тунă. Кунтах тата, -электромагнитлă машина пур. Ку вăл Харьковри ялхуçалăх машинисем тăвакан заводра кăларнă тĕлĕнмелле конструкциллĕ машина. Нумай çул ÿсекен курăк вăррисене вăл магнитлă порошокпа тасатать.

Тырă тасатакан машинăсем чылайăшĕ ĕçлемеççĕ. Мĕншĕн?

— Мĕншĕн ĕçлемеççĕ тетĕр?—Пирĕн çине куларах пăхса илчĕ Павел Корытников механик.—Колхозсем кăçал уйрăмах таса тырă илсе килеççĕ. Эпир вара, çавна пула, ĕççĕрех тăратпăр...

Чăн та, çак вăхăтра площадкăра пĕр машина патĕнче çеç тырă тасататчĕç. Тата симĕс çерем çине сарса пăрахнă шăналăк çинче типĕтнĕ тырра Канаш районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем михĕсене тултараççĕ.

— Каштах хыпалантăмăр пулас, лабораторире чĕрĕрех терĕс пирĕн тырра. Типĕтсе çур кун иртсе кайрĕ вĕт. Пимĕн те тума çук, типĕтес пулать... — Ĕçленĕ май васкаса, тата кăшт именнĕ пек калаçаççĕ çак колхозри М. Александровна Н. Васильев çамрăксем.

Çак кунсенче хатĕрлев пунктĕнчи лабораторире хĕрÿ ĕç пырать. Хатĕрлев пунктĕнче 14 лаборантка, вĕсем пурте тăрăшса, тимлĕн ĕçлеççĕ. Ф. Яшина çирĕм çул, Л. Зеленукина вунă çул хушши ĕнтĕ çак ĕçре. Лабораторире тăватă визировщица—инженерĕн ушăнĕса ĕçлеççĕ. Çамăл мар вĕсен ĕçĕ: кунĕне çĕршер машина çине улăхса, пиншер михĕ çинчи тырра анализ тума пухмалла. Нумай ĕçлекен Анна Александровăна Валентина Федорова ывăннине пĕрре те туймаççĕ пулас. Хăйсен ĕçне вĕсем лайăх тăваççĕ; юратнă Тăван çĕршыв валли тутти-сыппиçĕр килекен тырра хăвăрт, пĕр чăрмавсăр йышăнасси—вĕсен ĕçĕнчен те нумай килет.

ÿКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: хатĕрлев пункчĕ умĕнче (сулăти ÿкерчĕк); В. Ильина тата Ф. Лебедева лаборанткăсем ĕçре (варринчи ÿкерчĕк); тырăсем тасатмалли площадкăра; хатĕрлев пунктĕнчи столовăйра (аялти ÿкерчĕксем).

Тексчĕпе фотоÿкерчĕкĕсем **Ф. ИВАНОВАН.**

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнма

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй комитечĕ Чăваш республикинчен тăратнă çак кандидатсене выставка участникĕсем пулма çирĕплетнĕ:

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРАК

Аслă Елчĕк вăтам шкулĕ.

Аслă Елчĕк вăтам шкулĕнчи çамрăк натуралистсен кружокĕ.

Е. М. Молостов — шкул директорĕ, çамрăк натуралистсен кружокĕн руководителĕ.

П. В. Патшин, А. А. Хрисанова, П. Д. Хушкин, Н. С. Майнулов, Н. В. Липунов, А. Е. Молостов, Г. А. Тоньнов, П. И. Миланов—çамрăк натуралистсем.

Силос хывас ĕç япăх пырать

ЧКАЛОВСКИ. Кăçал районти колхозсенче кукуруза лайăх ÿсрĕ, ăна вăхăтра силослесан, выльăхсем валли сĕтеклĕ апат çителĕклĕ пулать. Иртнĕ çулсенчи опыт кăтартса панă тăрăх, çак культурăран силос хывмалли вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Анчах пулин те силос хывас ĕç районта япăх пырать-ха. Районĕпе кăçал мĕн пурĕ 32.800 тонна силос хывмалла пулсан, паянхи куна 2.318 тонна çеç хывнă. Чылай колхозĕсем ку ĕçе пуçăнман та. Сăмахран, «Пламя Октября», «Герой», «Первомайск», «Маяк», «Дружба» колхозсене илер. Çак колхозсен руководителĕсем: «Кукуруза тата кăштах ÿстĕр-ха, ăнкĕрĕпĕр» тесе силос хывма тытăнмаççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра кăçал 2.000 тонна силос хывмалла, ку таранччен 100 тонна çеç хывнă. Колхозра силос хывма сооруженисем çителĕксĕр.

Чылай колхозсен руководителĕсем силос хывас ĕçре МТС техники çине çеç шанса тăраççĕ. МТСăн кукуруза вырса пухмалли 3 комбайн пур. Анчах çак комбайнсем те тухăçсăр ĕçлеççĕ. Сăмахран, Н. Сафьянов механизатор августăн 7-мĕшĕнче «Путь Ленина» колхоз уйĕнчи кукурузăна вырма пикенчĕ. Агрегат малтанхи кунах ванса кайнă, кун хыççăн вăл виçĕ кун хушши ĕçлемесĕр ларнă.

Силос хывас ĕç—паян тумалли ответлă ĕçсенчен пĕри. Çавăнпа та çак ĕç çине тимлĕн пăхмалла.

А. МЕДВЕДЕВ, И. МАРКОВ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Куштансем"

Шупашкар районĕн прокурорĕ çапла çырать: «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июлĕн 8-мĕшĕнче пичетленнĕ «Куштансем» ятлă фельетон тăрăх ĕçе тĕрĕслесе пĕтернĕ, унта çырнисем хăйĕншĕн тата пĕрмаях ашкăнса çÿренĕшĕн И. Яргункин, П. Яргункин тата Г. Сумкова уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тунă.

Прокуратура Яргункинсене тата Сумковăна ответ тыттарма ĕçе Сĕнтĕр районĕн халăх судне ярса панă.

Вăрманпромхозсене ялан ĕçлекен кадрсемпе çирĕплетер

КПСС XX съезчĕ йышăннă Директивăра вăрман промышленноçне малалла аталантарас тĕлĕшпе сезонпа ĕçлекен вăрманпромхозсенчен çулталăк тăршшĕпех ĕçлекен предприятисем тума, оборудованине усă курассине нумай лайăхлатма палăртнă.

Партипе правительство тăрăшнипе иртни çулсенче пирĕн республикăри вăрман промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн механизациллĕ отраслĕ пулса тăчĕ. Унăн паянхи çÿрекен электростанцисем, тракторсем, пăравуссем, мотовозсем, автомашинăсем, электрокрансем, электропăчкăсем, лебедкăсем т. ыт. машинăсемпе механизмсем те пур. Ăна пула иртнĕ çулта трест ... йывăç касса хатĕрлессине 85 процент, ... турттарассине—80 процент, купалассине—60 процент таран механизациленĕ, ... иртессине те механизацилеççĕ. ... предприятисенче производствăри ... технологие — йывăçсене турачĕсемпе турттарассине ĕçе кĕртнĕ. Кăçал унăн ... 70 процентне çити ÿсмелле.

XX съезд решенийĕсене пурнăçласа, «Чăвашвăрман» тресчĕ кăçал пур вăрманпромхозсене те ялан ĕçлекен рабочисемпе ... çине куçарма йышăннă. Çакă пысăк ... пирĕ ĕç. Халалĕке треста пăхăнса ... çичĕ предприятипур ĕçе те ялан ... рабочисемпе тăвать. Çав предприятисем пĕр чылай ĕçлеççĕ. Сăмахран, ... вăрманпромхозĕ йывăç турттарма ... çулхи плана 120,9 процент, ... вăрманпромхозĕ—122,2 процент, ... вăрманпромхозĕ—120,8 процент, ... вăрманпромхозĕ—113,8 процент ... ĕç.

... те республикăри вăрман промышленноçĕ юлса пырать-ха. Трест, пĕтĕмпе илсен, продукци туса кăлармалли сур çулхи плана ирттерсе тултарчĕ пулин те, халăх хуçалăхне 30,6 пин кубометр йывăç парса çитереймерĕ.

Уйрăм вăрманпромхозсем юлса пыни, чи малтан, ялан ĕçлекен кадрсем хатĕрлеменнинчен килет. Вăхăтлăх ĕçлеме килекен çынсем кĕске хушăрах вăтăс техникăпа тухăçлă ĕçлеме вĕренсе çитеймеççĕ. Çавăнпа механизмсем час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ.

Юлашки çулсенче вăрманпромхозсенче ялан ĕçлекен рабочисен йышĕ ÿсрĕ. ФЗО шкулĕсемпе вăрман промышленность училищисенчен вĕренсе тухнă çамрăксем ĕçе нумай килсе кĕчĕç. Кăçалхи сур çулта кăна предприятисене тĕрлĕ квалификациллĕ рабочисем 1.100 çын панă.

Республикăра вăрман хатĕрлекен ăста рабочисем вĕрентекен виçĕ училище ĕçлет. Улатăрти техника училищи юлашки икĕ çул хушшинче 600 çын ытла вĕрентсе кăларчĕ. Кăçал вăл 60 тракторист, 60 лебедчик, 60 автокрановщик, 300 электромеханик тата 120 моторист вĕрентсе хатĕрлет.

Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ техника училищи тата Сĕнтĕрвăрри 15-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ механизаторсен йышлă кадрĕсене хатĕрлеççĕ. Çак шкулсем 74 рамщик, 50 слесарь, 190 нормировщиксемпе строительство мастерĕсем, 27 бракер, 160 тракторист, 40 автокрановщиксемпе лебедчиксем вĕрентсе хатĕрленĕ тата хатĕрлеççĕ.

Калас пулать, çав асăннă училищесенчен вĕренсе тухнă специалистсемпе час-часах тĕрĕс усă курмаççĕ, вĕсен ĕçри квалификацине ÿстерме тăрăшмаççĕ. 1955 çулта Кире вăрманпромхозне (директорăн кадрсем енĕпе ĕçлекен заместителĕ Крылов юлташ) 15-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă 17 трактористă янă. Вĕсенчен иккĕшĕ кăна тракторист пулса ĕçлеççĕ, ыттисем вара квалификацие ÿстерме кирлĕ пулăшу паманшăн предприятирен тухса кайнă. Çамрăк специалистсем çине çавăн пек пăхни кăçал пулмалла мар, вĕсене хăйсен специальноçĕпе кăна ĕçлеттермелле.

Правительство вăрман промышленноçĕнчи рабочисене çăмăллăхсем чылай парать. Вăтăлсан тата ĕçлеймен пулсан пысăклатнă пенси тÿлеççĕ, нумай ĕçленĕшĕн ĕç укçи хушса параççĕ. Электропильщиксемпе вĕсен помощникĕсене, лебедчиксене, крановщиксене, трактористсемпе вĕсен помощникĕсене, йывăç касакансене, турат иртекенсене, лавçăсене, грузчиксене, электромеханиксене т. ыт. те 1 çултан пуçласа 3 çула çитиччен ĕçленĕ пулсан çулталăкри тариф ставкинчен 10 процент хушса тÿлеççĕ, 3 çултан пуçласа 5 çула çитиччен—15 процент, 5 çултан пуçласа 10 çула çитиччен—20 процент, 10 çултан пуçласа 15 çула çитиччен—25 процент, 15 çултан иртсен 30 процент хушса тÿлеççĕ. Вăрман хатĕрлекен рабочисене тумтир тата атă-пушмак тÿлевсĕр параççĕ.

Рабочисене çурт лартма, выльăх туянма государство укçа парса пулăшать. Иртнĕ çулта Улатăр, Первомайски, Пăрачкав, Сĕмĕрле, Кире т. ыт. вăрманпромхозсенче государство пулăшнипе уйрăм çынсем 128 çурт лартнă, кăçал 90 çурт ытла лартаççĕ.

Вăрман промышленноçĕнчи рабочисене отпуск тăсса тата хушса пама палăртнă. Трактористсене, шоферсене тата ытти рабочисене черетлĕ отпуск çулталăкра пĕр уйăхлăха параççĕ тата виçĕ çул ĕçлесен тепĕр уйăх хушаççĕ.

Рабочисене ĕç укçи мĕн чухлĕ ĕçленине кура тÿлеççĕ. Ĕç нормине икĕ эрне хушши тăтăшах тултарса пынă пулсан, ĕçлесе илнĕ укçа çумне 20 процент хушса параççĕ. Нормăна ирттерсе тултарнă пулсан, çав ирттерсе тултарнă пайĕшĕн пĕрре хут çурă хушса тÿлеççĕ. Йывăç касса йăвантаракан электропильщик кунне 29 тенкĕ, йывăç турачĕсене иртекен—24 тенкĕ, каснă йывăçа сортланă, штабеле купаланă, тиенĕ, пушатнă çĕрте ĕçлекен рабочисем 22 тенкĕ укçа илеççĕ. Çапла вара тип çеç пырса кĕнĕ рабочи те уйăхра 660—780 тенкĕ ĕçлесе илме пултарать. Кире вăрманпромхозĕнчи М. Сысуйкин тракторист кăçалхи иккĕмĕш кварталта 9.730 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Çав вăрманпромхозри Н. Борков шофер—4.268 тенкĕ, Н. Гришкин крановщик—4.724 тенкĕ, Алтышево вăрманпромхозĕнчи Н. Логинов электропильщик—3.477 тенкĕ, Первомайски вăрманпромхозĕнчи Н. Антонин лавçă—3.999 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Чылай мастер участокĕсенче ĕçе цикл меслечĕпе тăваççĕ. Çакă ĕç тухăçлăхне ÿстерме май парать. Цикл графикне пурнăçласан рабочисене премй параççĕ, ĕç нормине ирттерсе тултарнăшăн 20 процент хушса тÿлеççĕ.

Партипе правительство вăрманта ялан ĕçлекен кадрсен йышне ÿстерессишĕн вĕçĕмсĕр тăрăшаççĕ, вĕсене тухăçлă ĕçлеме, культурăллă канма, савăнăçлă пурăнма лайăх условисем туса параççĕ. Государство пурăнмалли çуртсемпе культурăпа йăла учрежденийĕсене тума çулсерен укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать. «Чăвашвăрман» трест юлашки виçĕ çул хушшинче кăна 14 пин тăваткал метр пурăнмалли çуртсем тунă. Çав вăхăтрах рабочисемпе служащисем хăйсем валли 5,55 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем лартнă.

Унсăр пуçне клубсем, шкулсем, больницăсем, магазинсем, пекарньăсем, ача сачĕсемпе яслисем, мунчасем, ледниксем, культурăпа йăла учрежденийĕсем, суту-илÿпе производство çурчĕсем нумай тунă. Сĕмĕрле вăрманпромхозĕн Речной вăрман пунктĕнче пурăнмалли çуртсемпе пĕрлех столовăй, клуб тунă, магазин уçнă, çуртсене радио кĕртнĕ. Йĕпрес вăрманпромхозĕн Черноречески поселокĕнче клуб, ача сачĕпе ясли, фельдшер пункчĕ, мунча, пекарня, апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем сутмалли магазинсем, çĕвĕ тата атă-пушмак çĕлемелли мастерскойсем, парикмахерски пур. Клубра кино кăтартаççĕ, лекцисемпе докладсем пулаççĕ, художествăлла пултарулăх коллективĕ концертсем час-часах парать. Библиотекăра вуламалли зал пур. Кунта поселокра пурăнакансем тĕрлĕрен кĕнекесемпе хаçат-журналсем вулаççĕ, шашка-шахматла, доминопа, биллиардпа выляççĕ.

Улатăр вăрманпромхозĕн Соловьевскри вăрман поселокĕнче те рабочисене культурăллă канма условисем туса панă. Клуб тата хĕрлĕ кĕтессем тунă. Час-часах кино пулать, художествăлла пултарулăх коллективĕн кружокĕсем ĕçлеççĕ, библиотека, физкультура площадки пур. Поселока электрификациленĕ тата радиофикациленĕ. Общежитисенче лайăх кроватьсем, сехетсем, тĕкĕрсем, тумбочкăсем, шкафсем, музыка инструменчĕсем пур. Тунтирсене тивĕтме сушилкăсем тунă.

Пăрачкав, Кире, Первомайски вăрманпромхозĕсен поселокĕсем те çĕнелсе, лайăхланса пыраççĕ. Сăмахран, Первомайски вăрманпромхозĕн тĕп поселокĕнче кĕске вăхăт хушшинче шкул, клуб, ледник, овощехранилище, магазин, культурăпа йăла учрежденийĕсемпе суту-илÿ çурчĕсем туса лартнă.

Кире вăрманпромхозĕн поселокĕсенче кăçалхи ултă уйăхра 1.378 тăваткал метр пурăнмалли çурт тата столовăйпа пекарня çурчĕсем тунă. Южнăй вăрман пунктĕнче клуб туса пĕтернĕ. Çывăх вăхăтсенчех Кире поселокĕнче 32 койка вырнаçмалăх больница тата столовăй пулать.

Хальхи вăхăтра вăрманпромхозсенче ялан ĕçлекен кадрсем хатĕрлесси çине уйрăмах тимлĕ пăхни кирлĕ. Ку тĕлĕшпе Улатăр, Первомайски, Пăрачкав вăрманпромхоз руководителĕсен хытă ĕçлемелле. Сĕнĕрен илекен рабочисем валли лайăх общежитисем хатĕрлемелле, вĕсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса памалла. Рабочисене ĕç условийĕсем, мĕнле çăмăллăхсем пани çинчен тĕплĕн каласа ăнлантармалла.

Вăрман ĕçлеме çĕнĕрен ялан тата килекен рабочисенчен чылайăшĕн специальность çук. Вĕсем ĕçленĕ хушăрах электропильщик, тракторист, лебедчик, крановщик специальноçĕсене вĕренме ĕмĕтленеççĕ. Вăрманпромхоз администрацийĕн вара вĕсене тивĕçлĕ пулăшу памалла, специальность туянма пулăшмалла. Çакă предприятисенче ялан ĕçлекен кадрсем хатĕрлеме нумай пулăшать.

Вăрман хатĕрлекен предприятисенчи парти, профсоюз организацийĕсен те çĕнĕ кадрсене тăрăшса ĕçлемелле, вĕсене хăйсем халăх хуçалăхĕшĕн пысăк ĕç туни çинчен каласа памалла, ĕç çине коммунистла пăхма вĕрентмелле, производствăра ĕç дисциплинине çирĕп пурнăçласа пыма кирли çинчен ăнлантармалла.

Республикăри вăрманпромхозсене ялан ĕçлекен кадрсемпе çирĕплетер.

П. ТРОФИМОВ.

«Чăвашвăрман» трест управляющийĕн заместителĕ.

Профсоюз организацийĕсен ĕçне вăйлатмалла

(Шупашкар хулинчи профсоюз активĕн пухăвĕнчен)

Профсоюз активĕн хулари пухăвĕ «ВЦСПС V-мĕш пленумĕн итогĕсем тата хулари профсоюз организацийĕсен задачисем çинчен» Чăвашоблпрофсовет председателĕ М. Романов юлташ тунă доклада сӳтсе явнă.

Хулари промышленность предприятийĕсенче пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен пурнăçласишĕн социализмла ăмăрту анлă сарăлнă. Ăмăртура Шупашкарти чăлха фабрики, Приволжски вăрманпромхоз, апат-çимĕç комбиначĕ, строительствăпа монтаж управленийĕ, Атăл леш енчи электростанци малта пыраççĕ, вĕсене Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсовечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене панă.

Анчах пур предприятисем те тухăçлă ĕçлеççĕ теме çук-ха. Çичĕ уйăх хушшинче хулари 53 предприятирен 15-шĕ плана тултарайман. Уйрăмах çăкăр пĕçерекен иккĕмĕш завод, аш-какай комбиначĕ, ликерпа эрех завочĕ начар ĕçлеççĕ. Çак предприятисенче профсоюз организацийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Социализмла ăмăртăва ячĕшĕн çеç йĕркеленĕ. Лекцисемпе докладсем сайра хутра кăна ирттереççĕ. Асăннă предприятисенче ĕç дисциплини хавшанă, государство пурлăхне çаратас çул çине тăнă работниксем те тĕл пулкалаççĕ. Ку çитменлĕхсем ликерпа эрех завочĕнче уйрăмах палăрать.

Хăшпĕр предприятисенче технологи процесĕсене лайăхлатмаççĕ, малта пыракансен опытне пропагандăламаççĕ, брак тăваççĕ; тухăçлă ĕçлеймеççĕ. Профсоюз организацийĕсем вара хуçалăх руководителĕсемпе килĕшсе лараççĕ, палăрнă йĕркесĕрлĕхсене çийĕнчех пĕтерме тăрăшмаççĕ.

123-мĕш стройтрестри комсомол организацийĕн секретарĕ **Румянцев** юлташ пухура çапла каларĕ:

— Пирĕн трест ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай. Строительство вăраххăн пырать, унăн пахалăхĕ начар. Профсоюз организацийĕ çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмасть, постройком трест руководителĕсем калаччен иртмест. Производствăлла канашлусем сайра ирттереççĕ. Унта руководительсем пулмаççĕ. Çавăнпа пирĕн коллективра ĕç дисциплини япăхса кайнă, прогульщиксем тата ĕç çине çиелтен пăхакансем чылай. Облпрофсовечĕн пирĕн трест çине ытларах çаврăнса пăхни кирлĕ.

Богоявленский юлташ (Приволжски вăрманпромхоз) коллективлă договорсене формăшăн кăна туни, вĕсене мĕнле пурнăçласа пынине вăхăтра тĕрĕслемени çинчен каларĕ.

— Эпĕ çамрăксен канăвĕ пирки каласшăн,—терĕ Богоявленский юлташ.—Крупская ячĕпе тăракан паркра çамрăксем мĕнле канни çинчен хаçатсенче тĕрĕс çырчĕç. Унта доминопа, шахматла укçалла выляççĕ, час-часах харкашу пулать. «Родина» кинотеатрти ташламалли зал ялан хупă.

Çуллахи вăхăтра çамрăксем Атăл леш енче канма юратаççĕ. Унта та йĕрке çук. Павильонра тата ларексенче таса мар. Облпрофсовечĕн çак йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме тăрăшмалла.

Электроаппаратура заводĕнчи **Точилин** юлташ рабочисем валли пурăнмалли çуртсем çитменни, хулара транспорт йĕркеллĕ ĕçлеменни çинчен каларĕ. Вăл хырăм чирĕпе аптракан ĕççыннисем валли хулара атарласа столовăй уçма сĕнет.

— Пирĕн колхоз пасарĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Улатăрти коллективпа ăмăртать. Ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешетпĕр. Çак кунсенче эпĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Пыл та çу...» ятлă фельетон вуларăм. Унта сĕт-çу тресчĕ çинчен çырнă. Фельетон тĕрĕс. Маслопром айăпне пулах сĕте, çăва, тăпăрча хăйăх тĕрĕслемесĕрех пасарта сутма ирĕк параççĕ. Хулара ăçта килнĕ унта сутă тăвасси пуçланнă. Облпрофсовечĕн суту-илӳ ĕçĕпе те интересленмелле,—тет Шупашкарти колхоз пасарĕнче ĕçлекен **Иванова** юлташ.

Пухура пурĕ 9 çын тухса каларĕ. Вĕсем рабочисемпе служащисем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатма, производствăри ĕçе организацилессине лайăхлатма, социализмла ăмăртăва кирлĕ пек йĕркелеме, малта пыракансен опытне сарса пыма кирли çинчен каларĕç.

Профсоюз активĕн пухăвĕ КПСС XX съезчĕн историлле решенийĕсене срокчен пурнăçламалла тăвас тĕлĕшпе постановлени йышăнчĕ.

Пурăнмалли çуртсем лартаççĕ

Вăрман хатĕрлекенсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе вăрманпромхозсем çулсеренех пурăнмалли çуртсем чылай лартаççĕ. Тĕслĕхрен, иртнĕ пилĕкçуллăхра треста пăхăнса тăракан предприятисем пурĕ 24.293 тăваткал метр чухлĕ çуртсем лартнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче çĕнĕ поселоксем ӳсе ларчĕç. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра вара тата нумайрах—35.200 тăваткал метр, вăл шутра кăçал—9.000 тăваткал метр чухлĕ çуртсем лартмалла.

Пурăнмалли çуртсем пуринчен ытларах ялсенчен аяккарах вырнаçнă вăрман пункчĕсенче лартаççĕ. Кăçалхи плана тултарсан, пурăнмалли çуртсен калăпăшĕ Улатăр вăрманпромхозĕнче 20 процент, Кире вăрманпромхозĕнче—29 процент, Первомайски вăрманпромхозра—35 процент, Пăрачкав вăрманпромхозĕнче — 40 процент ӳсет.

Пурăнмалли çуртсем лартас тĕлĕшпе Буински вăрманпромхоз ыттисене пахах тĕслĕх кăтартать. Вăл çулталăкри плана августăн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă та ĕнтĕ. Кире вăрманпромхозĕн кăçал 1.558 тăваткал метр чухлĕ çуртсем лартмалла, вăл 1.378 тăваткал метр туса пĕтернĕ.

Вăрманти поселоксенче çулсеренех шкулсем, ача сачĕсемпе яслисем, столовăйсем, пекарньăсем, магазинсем, клубсем чылай лартаççĕ. Çĕршер рабочи государство пулăшнипе хăйсем валли пурăнмалли çуртсем лартнă.

Хăшпĕр предприятисен руководителĕсем пурăнмалли çуртсем лартма уйăрса панă укçа-тенкĕпе вăхăтра усă курма тăрăшмаççĕ. Первомайски вăрманпромхозра общежитисемпе хваттерсем сахал. Çакна шута илсе, трест ку вăрманпромхоза 1.864 тăваткал метр чухлĕ çуртсем лартма укçа-тенкĕ уйăрса панă. Хĕл çитесси инçе юлмарĕ. Апла пулин те вăрманпромхоз 322 тăваткал метр чухлĕ çеç çуртсем туса пĕтернĕ. Пăрачкав, Çĕмĕрле тата Улатăр вăрманпромхозĕсенче те çак ĕç япăх пырать. Улатăрти йывăç япаласем тăвакан комбинатпа Кирери хăма çуракан заводра вара кăçал пĕр çурт та туса пĕтермен. Хĕле кĕриччен пурăнмалли çуртсене пурне те туса пĕтерме тăрăшмалла. Çавна пурнăçлама вăрманпромхозсен мĕн кирли пурте çителĕклĕ.

Н. НИКИТИН.
«Чăвашвăрман» трестĕн производство пайĕн начальникĕн заместителĕ.

М. ФЕДЮКОВА ХĂЙĔН СĂМАХНЕ ПУРНĂÇЛАРĔ

Мария Леонтьевна Федюкова доркăра вуннăмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхоз членĕсем унăн ятне ялан хырă суйса асăнаççĕ.

— Вылăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлесси мана ача чухнех кăмăла каятчĕ, çавăнпа та çак ĕçе юратса доркăра ĕçлеме тытăнтăм,—тет Федюкова.

Малтанхи вăхăтра унăн ĕнесене пăхас, вĕсенчен сĕт нумайрах суса илес енĕпе нимĕнле опыт та пулман. Çавăнпа та вăл малтанах республикăри малта пыракан доркăсен опычĕпе паллашма тăрăшнă, зоотехник кăтартăвĕсене ялах пурнăçласа пынă. Хăйĕн пĕлĕвне тата ытларах ӳстерес тесе агрозоотехника курсĕнче вĕренме пуçланă. Кăçал вăл иккĕмĕш курса ăнăçлă вĕренĕ.

Доярка тăрăшни сая кайман, вăл çултан-çулах ĕнесенчен сĕт ытларах суса илме пуçлана.

К ă ç а л М а р и я Леонтьевна хĕллехи вăхăтра кашни ĕнерен 650—700 килограмм тата çуллахи вăхăтра 1.000 килограмран кая мар сĕт суса илме обязательство йышăннă. Вăл хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçларĕ: иртнĕ вунă уйăх хушшинче кашни ĕнерен 2.731 килограмм сĕт суса илчĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтпа танлаштарсан, кăçал вунă уйăх хушшинче кашни ĕнерен вăл 734-шар килограмм ытларах сĕт суса илнĕ. Районти доркăсен ăмăртăвĕнче Федюкова малта пырать.

Мария Федюкова юлташ фермăри пĕтĕм ĕçе ятарласа çирĕплетнĕ кун йĕркипе тăрăх туса пырать. Ĕнесенчен сĕт ытларах суса илес тесе, вĕсене лайăх пăхса усрама тата вăхăтра сума тăрăшать, ветеринарипе зоотехника правилисене çирĕп пăхăнса ĕçлет.

— Апат ытларах парăр, вара ĕне сĕт хушать, теççĕ хăшпĕр доркăсем,—тет Федюкова юлташ.—Ку йăнăшах та мар пулĕ, анчах пĕтĕмĕшпе тĕрĕс теме те çук. Сĕт ытларах суса илесси ĕнесене нумайрах апат çитернинчен çеç мар, вĕсене пĕлсе, тĕрĕс рационпа тăрантарнинчен тата вăхăтра шăварнинчен килет.

Улăма ĕнесене пĕрас умĕн вăл турасса пăспа çемçетет, кайран вара тăварпа çăнăх е концентратсем сапать. Çĕрулмине те вăл ĕнесене чĕрĕлле памасть, пĕçернĕ хыççăн тăварласа шĕпетсе парать. Хăшпĕр доркăсем апата купаласа параççĕ. Федюкова ун пек тумасть. Вăл ялан пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн парса çитерет. Çапла вара ĕнесем панă апата юратса тата пĕтĕмпех çисе яраççĕ, кормушкăра нимĕн чухлĕ те хăвармаççĕ.

Ĕнесене кукуруза силосĕпе тата сулçипе тăрантарнă чухне те хушăран тăвар шывĕ е концентрат сапса парать. Пĕр йышши апат ан йăлăхтартăр тесе, Федюкова юлташ рационра ĕнесем апата мĕнле çинине кура йĕркелет, унăн уйрăмлăхне кура, уйрăм тăрантарать. Ĕнесене çавăн пек тăрантарсан, вĕсенчен сĕт суса илесси ӳсет.

Сăвакан ĕнесене тăрантарнă чухне концентратсем ытлашши нумай çитермесен те юрать. Вĕсене сĕтеклĕ апатсем ытларах çитерни кăна кирлĕ. Халĕ ĕнесене сĕтеклĕ апатсем çителĕклĕ таран параççĕ.

Çуллахи вăхăтра ĕнесене ятарласа организацилеспĕ симĕс конвейер çинче е вăрманта усраççĕ. Кĕтӳре çӳренĕ чухне çителĕклĕ таран симĕс апат çиеççĕ пулсан та, Федюкова юлташ вĕсене çĕрле симĕс курăк çулса парать. Халь хи вăхăтра ĕнесене кайран ӳснĕ пикăпа сĕлĕ хутăшĕ тата кукуруза çулса çитерет. Вăл ĕçре ӳркенсе тăмасть, хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Ăна ялан хăй пăхакан ĕнесем патĕнче курма пулать.

Ĕнесенчен сĕт нумай суса илесси ĕне çиллине лайăх асăрхаса тăнинчен, кашни кунах пĕр вăхăтра суниинчен те килет. Федюкова юлташ сăвас умĕн ĕне çиллине ăшă шыва çуса тасатать, шăллине шăлса типĕтет, сунă вăхăтра виçĕ хут массаж тăвать. Массаж туни çилле хытма памасть, ĕне пĕтĕм сĕтне антарать. Вăл çакна та манмасть, сĕтĕн юлашки тумламĕнче çу нумай, çавăнпа та пĕр тумлам сĕт юлмичченех сума тăрăшать.

Ĕне сĕтлĕ пуласси ăна пăруран лайăх пăхса усранинчен нумай килет. Çавна шута илсе, пăрусене телятница аллине пачченех сывă та тĕреклĕ усрама тăрăшать. Пăруланă хыççăн малтанхи 5—7 кун хушши пăрăва талăкра 4—5 хут ăшă сĕт ĕçтерет. Пилĕк кун иртсен вĕретнĕ шыв та ĕçтерме пуçлать.

Колхозри доркăсем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă, вĕсем сĕт суса илессине уйăхран уйăхах ӳстерсе пыраççĕ. Çамрăк доркăсене Мария Леонтьевна хăйĕн опычĕпе паллаштарать, вĕсене сĕт ытларах суса илме вĕрентсе пырать. Костякова, Ванюкова тата Мадярова доркăсем те ăмăртăва хутшăнса пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Июль уйăхĕнче Костякова доярка хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен Федюкова доркăран нумайрах сĕт суса илсе колхозра малти вырăна тухрĕ. Мария Леонтьевна çакăншăн пăшăрханмасть, хăйĕн ĕçри юлташĕсене тата ытларах пулăшма тăрăшать.

Е. ВАНЮШКИНА.

КОНСУЛЬТАЦИ

Государство пенсийĕсем илме мĕнле условисем кирлĕ

Государство пенсийĕсем çинчен кăларнă Законра пенсисене илме мĕнле условисем кирли çинчен тĕплĕн каланă. Мĕнле пенси илессине кура, çав условисем тĕрлĕрен пулаççĕ. Ватăлнă пирки паракан пенсие илмелли условисем пĕр тĕрлĕ, инвалида тухнă пирки пенси илмелли условисем тепĕр тĕрлĕ, пăхса усракансăр тăрса юлнă пирки пенси илмелли условисем тата тепĕр тĕрлĕ. Анчах çак условисем пурте пĕр принципран тухса тăраççĕ. Çав принцип вăл—ку таранчченмĕн чухлĕ ĕçленине тата мĕнле пахалăхпа ĕçленине шута илни, урăхла каласан, социализм принципĕ—кам ытларах ĕçленĕ, ăна пенси пысăкрах виçепе памалла, кам йывăртарах ĕçре ĕçленĕ, ăна пенси çăмăлтарах условисемпе памалла. Ку ĕнтĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ принцип, кашни ĕççынни коммунизм тăвас ĕçре пĕтĕм вăйя хурса ĕçлеме хăтланттаракан принцип.

Пенси виçине пур чухне те çак тĕп принцип тăрăх, ăна илме тивĕçлĕ çын хăй ĕçленĕ вăхăтра мĕн чухлĕ ĕç укçи илнинчен шутласа параççĕ, мĕншĕн тесен ĕç укçи вăл мĕн чухлĕ ĕçленине тата мĕнле пахалăхпа ĕçленине кăтартакан тĕп палăрăх. Пысăкрах ĕç укçи илнĕ пулсан, вăл çынна пенси те пысăкрах виçепе памалла, пĕчĕкрех пулсан, пенси те пĕчĕкрех виçепе памалла.

Законра тĕрлĕ пенсисем валли тĕрлĕ виçеллĕ пенсисене—чи пысăкрах тата чи пĕчĕкрех пенсисене те кăтартса панă. Сăмахран, ватăлнă пирки паракан пенси 1.200 тенкĕрен ытла мар, 300 тенкĕрен кая мар пулмалла.

Ватăлнă пирки паракан пенсие илме арçынсем—60 çула çитни, хĕрарăмсем—55 çула çитни кирлĕ. Ĕç стажĕ арçынсен—25 çултан кая мар, хĕрарăмсен—20 çултан кая мар пулмалла.

Инвалида тухнă пирки пенси инвалида тухнă чухне миçе çула çитнине тата ĕç стажĕ Законра кăтартнă çултан кая мар пулнине шута илсе параççĕ. Сăмахран, 20 çултан пуçласа 23 çула çитнĕ хушăра инвалида тухнă пулсан, пенси илме арçынна 2 çултан кая мар, хĕрарăма 1 çултан кая мар ĕç стажĕ кирлĕ; 56 çултан пуçласа 61 çула çитнĕ хушăра инвалида тухнă пулсан, арçынна—18 çултан кая мар, хĕрарăма 14 çултан кая мар ĕç стажĕ кирлĕ.

Пăхса усракансăр тăрса юлнă пирки паракан пенсие инвалида тухнă пирки паракан условисем тăрăхах памалла: пăхса усракансăр миçе çула çитсе вилнине тата унăн мĕн чухлĕ ĕç стажĕ пулнине кура. Урăхла каласан, кунта пенсие отражательнăй право принципĕпе памалла тунă.

Инвалида тухнă пирки паракан пенси виçи ĕçлес пултарулăха мĕн чухлĕ çухатнинчен те килет. Ку тĕлĕшпе инвалидсене виçĕ группăна уйăрнă: пĕрремĕш группа—ĕçлес пултарулăха пĕтĕмĕшпех çухатнисем тата хăйсене пăхса усракансăр пурăнма пултарайманнисем; иккĕмĕш группа—ĕçлеме пултарайманнисем; виççĕмĕш группа—хăйсен профессийĕпе ĕçлеме пултарайманнисем, анчах пĕчĕкрех квалификациллĕ урăх ĕçе кусма пултараканнисем.

Закон тăрăх, çынна инвалида тухнă тесе врачсен ĕçе юрăхлине палăртакан экспертиза комиссийĕ (ВТЭК) çак çӳлте асăннă виçĕ группăран пĕрине памалла тусан кăна шутлаççĕ. ВТЭК-сем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ çирĕплетнĕ Положени тăрăх ĕçлеççĕ.

Инвалида тухнă пирки паракан пенси виçисем пенси илекен мĕнле сăлтавпа инвалида тухнинчен те килеççĕ. Ĕçре суранланнипе е профессиллĕ чирпе чирлесе инвалида тухнă пулсан, пенсие ĕç стажĕ мĕн чухлĕ пулнине шута илмесĕрех памалла тата ун пек инвалидсене пенси пысăкрах виçепе памалла.

Пăхса усракансăр тăрса юлнă пирки паракан пенсисен виçи çемьере ĕçлеме пултараймасни миçе çын пулнинчен те килет: çемьере ĕçлеме пултарайманни пĕр çын пулсан, пенси виççĕмĕш группăри инвалида паракан виçепе, иккĕ пулсан—иккĕмĕш группăри инвалида паракан виçепе, виççĕ е унтан та ытларах пулсан—пĕрремĕш группăри инвалида паракан виçепе памалла.

Халăх хуçалăхĕн уйрăм отраслĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене тата ытти хăшпĕр граждансене пенси льготăллă условисем тăрăх памалла тунă. Ун пек льготăллă условисем тăрăх пенси çĕр айĕнчи ĕçсенче, сывлăхшăн сиенлĕ ĕçсенче тата вĕри цехсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене, çавăн пекех тата ытти йывăр условисенче ĕçлекенсене ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ çирĕплетнĕ списоксем тăрăх параççĕ. Çавăн пек рабочисемпе служащисен льготăллă пенси илме хăйсене кирлĕ стажăн çуррийчен кая мар вăхăт хушши çав списоксенче кăтартса панă ĕçсенче ĕçлени кирлĕ.

Ĕçре аманнипе е профессиллĕ чирпе чирлесе инвалида тухнă рабочисемпе служащисен льготăллă пенси илмешкĕн льгота паракан ĕçрен инвалида тухни кирлĕ. Анчах инвалида тухнă чухне льгота паракан ĕçре ĕçленĕ вăхăт хăйне кирлĕ стажăн çурринчен кая мар пулнă пулсан, ун пек рабочипе служащие пенси, льгота паракан ĕçрен инвалида тухман пулин те, льготăллă условисем тăрăх памалла.

Рабочипе служащие льготăллă условисем тăрăх пенси паракан ĕçрен урăх ĕçе куçласа лартнă пулсан тата вăл çав ĕçре 5 çултан мала мар вăхăт хушши ĕçленĕ пулсан, пенси ун пек рабочипе служащие хăйне çав ĕçе куçличченхи ĕçпе пама тивĕçлĕ льготăллă условисем тăрăх параççĕ.

Законра çавăн пекех тата ватăлнă пирки паракан пенсие илме нумай ача çуратса ӳстернĕ хĕрарăмсем валли тата суккăр рабочисемпе служащисем валли пысăк льготăсем пăхнă. Ватă пирки паракан пенсие илме хĕрарăма 55 çула çитни кирлĕ тата унăн 20 çултан кая мар ĕç стажĕ пулмалла. Пилĕк е унтан та ытларах ача çуратса вĕсене 8 çула çитиччен пăхса ӳстернĕ хĕрарăм ун пек пенси 50 çула çитсенех илме пултарать. Ун пек пенси илме ăна ĕç стажĕ 15 çул кăна кирлĕ.

Инвалида тухнă пирки пенси илекен суккăр рабочи е служащи—арçын 50 çула çитсен, унăн 15 çул ĕç стажĕ пулсан, хĕрарăм 40 çула çитсен, унăн ĕç стажĕ 10 çул пулсан, ватăлнă пирки паракан пенси çине куçма пултарать. Çавăн пек рабочи е служащи, кăтартнă çулсене çитнĕ пулсан тата вĕсен асăннă çулсенчен кая мар ĕç стажĕ пур пулсан, унччен инвалид шучĕпе пенси илсе тăман пулсан та, ватăлнă пирки паракан пенси илме пултарать.

Ашшĕ те амăшĕ те вилнĕ пирки тăлăха юлнă ачасене, ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ те ĕçленĕ пулсан, пенси вĕсен иккĕшĕн ĕç укçисене пĕрле хушса шутласа памалла. Çав вăхăтрах ун пек тăлăх ачасене пенси ĕçре суранланса вилнĕ çынсен çемйисене паракан условисем тăрăх памалла.

П. ВАСИЛЬЕВ.

Тĕнчери лару-тăру

АРАБСЕН ÇĔРШЫВĔСЕНЧИ ХАЛĂХСЕМ ПĔР КĂМĂЛЛА

Августăн 16-мĕшĕнче, Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту тăрăх Лондонра пухăннă конференци уçăлнă кун, арабсен çĕршывĕсенче—Сирире, Ливанра, Иорданире, Суданра тата ытти çĕршывсенче забастовкăсем пулса иртнĕ. Вĕсене Египет Республикине пĕр шухăшлă пулнине палăртма ирттернĕ. Хĕвелтухăçĕнчи арабсен çĕршывĕсем пурте Египет Суэц каналне национализацилес пирки йышăннă тĕрĕс решение хӳтĕлеççĕ тата хĕвеланăçĕнчи державăсем Египетăн шалти ĕçĕсене хутшăнма хăтланнине хирĕç протестлеççĕ. Египетра хăйĕнче правительство канала национализацилеме йышăннине хӳтĕлесе 24 сехет хушши забастовка тунă, забастовка çĕршывра пур çĕрте те сарăлнă. Арабсен мĕнпур çĕршывĕсенчи халăхсемпе правительствăсем, çав шутра империалистсен танатине тăлласа лартнă Ирак та, Египет позицийĕсене, вăл хăйĕн экономикăпа политика тĕлĕшĕнчи никама пăхăнманлăхне сыхланине пĕтĕмпех ырлани çинчен пĕлтернĕ.

Мирĕ юратакан мĕнпур халăхсем Египет майлă тăраççĕ. «Тĕнчери тĕрлĕ çĕршывсенчи, тĕрлĕ тĕне ĕненекен тата тĕрлĕ нацисен çыннисем—пĕр миллион çурă ытла шутланакан çынсем хăйсен Египета пур енĕпе те пулăшасси çинчен пĕлтерчĕç»,—тесе çырчĕ çак кунсенче Египетри «Аль Гумхурия» хаçат. Çынсен шухăш-кăмăлĕ çапла чухне Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтура арабсен çĕршывĕсем пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçлени пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Çакă вăл ку çĕршывсен наципе никама пăхăнманлăхшăн тата экономикăпа çĕнĕрен çĕклентерессишĕн кĕрешес ĕçри пĕрлĕхĕ вăйланнине пĕлтерет.

Хĕвелтухăçĕнчи арабсен государствисем—Египет, Сири, Ливан, Иордани, Ирак, Судан, Арави сурмаутравĕнчи çĕршывсем—питĕ анлă площаль йышăнаççĕ, вĕсен территорийĕсем пĕтĕмпе 7,3 миллион тăваткал метр. Вĕсенчи халăх—60 миллион çынна яхăн. Ĕлĕк çак çĕршывсем пурте колониле пусмăрта пулнă. Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешес юхăмĕ вунă çул хушшинче, фашистла Германие аркатса тăкнă хыççăн, уйрăмах вăйлă сарăлнă. Çав юхăм çĕнтернĕ хыççăн арабсен чылай çĕршывĕсем, çав шутра Сири, Ливан, Иордани, Ливи, Египет, никама пăхăнманлăх илнĕ тата экономикăпа хăйсене мĕнле кирлĕ пек аталантарса пыракан государствăсем пулса тăнă.

Колониле пусмăртан хăтăлнă çĕршывсен наципе экономикăпа аталантарас ĕçре малтанхи пысăк çитĕнӳсене туса пултарнă. Сирипе Ливанра çĕре шăвармалли каналсем тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Египетра феодализмла йĕркене хирĕçле çĕр реформине пурнăçланă. Хелуанра (Каир патĕнче) малтанхи металлурги заводне тăваççĕ. Нил çинче Асуан патĕнче питĕ пысăк пĕве тата хăватлă электростанци тума палăртнă.

Арабсен çĕршывĕсем никама пăхăнманлăхпа мире империалистсен тапăннинчен сыхлас тĕлĕшпе политикăпа ĕçсене пĕр-пĕрне килĕштерсе туса пыни пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Çак енĕпе араб çĕршывĕсем Азипе Африкăри çĕршывсен Бандунгри конференцине хутшăнни тата арабсен виçĕ государствин—Египет, Сири тата Саудовски Арави çĕршывĕсен пуçлăхĕсен кăçалхи март уйăхĕнче пулнă канашлăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕç. Канашлăва пухăннисем Бандунгри конференци йышăннă принципсем майлă тăни çинчен пĕлтерчĕç, Багдадра тунă агрессиллĕ пакта хирĕç хытă тăчĕç, колониллĕ державăсен манёврĕсене тăрă шыв çине кăларма тата сиресирĕ яма калаçса татăлчĕç.

Арабсен çĕршывĕсен колониализма хирĕç кĕрешес ĕçри пĕрлĕхне хĕвеланăçĕнчи государствăсен реакцилле ушкăнĕсем тата хаçачĕсем тапăнма хăтланаççĕ. Çавăн пек тапăннисем çине ответлесе, Ливанри «Аз-Заман» хаçат çапла çырчĕ: «Хĕвеланăçĕнчи пичет ялан арабсен çĕршывĕсем пĕлтерĕшне чакарма тата пĕчĕклетме тăрăшать. Анчах эпир хĕвеланăçĕнчи çĕршывсемпе империалистсен хаçат-журналĕсене çапла калатпăр: халĕ ĕнтĕ арабсен çĕршывĕсем влаçра феодалсен тата империализм хӳреШкисен тăнă вăхăтри çĕршывсем мар. Кунсăр пуçне, арабсен мĕнпур çĕршывĕсен тăванла Египетпа пĕр майлă пуласçине, çапла пулма нимĕн те чăрмантарма пултарас çуккине хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем пĕлме тивĕçлĕ».

Арабсен çĕршывĕсем пĕр кăмăллине палăртмалли юхăмра, вĕсен колониализма хирĕç, никама пăхăнманлăхпа мире сыхлассишĕн кĕрешесенче ĕççынни массисем ĕçе тата паракан вырăн йышăнса тăраççĕ. Иртнĕ çуркунне Дамаскра арабсен çĕршывĕсенчи профсоюзсен пĕрремĕш конференцийĕ пулса иртрĕ, вăл арабсен мĕнпур çĕршывĕсенчи рабочисен демократиллĕ федерацине туса хучĕ. Федераци хăйĕн умне миршĕн, çар пакчĕсене хирĕç, халĕ те империализм пусмăрĕнчи халăхсене ирĕклĕхшĕн кĕрешес ĕçре пулăшас задача лартрĕ. Халĕ çак Федераци советĕ Египет Суэц каналĕн компанине национализацилеме йышăннине арабсен çĕршывĕсенчи рабочисем пĕр шухăшлă пулса ырлани çинчен пĕлтерчĕ.

Египет правительствин решенийĕ Африкăпа Азири ытти çĕршывсене колониле пусмăрăн юлашкисене хирĕç пыракан кĕрешĕве вăйлатма хавхалантарать. Сăмахран, Индонезире нумаях пулмасть ют çĕршыв компанийĕсем çине налогсем хурасси çинчен закон кăларнă. Халиччен çав компанисем тĕрлĕ льготăсемпе усă курнă пулнă. Тата çакăн çинчен ася илтерни те вырăнлă: Индонези правительстви нумаях пулмасть йышăннă решенире «Индонезии Голланди умĕнчи парăмĕсене текех йышăнмалла мар тата тӳлемелле мар», тесе каланă.

Арабсен çĕршывĕсенчи халăхсем хăйсен никама пăхăнманлăхĕшĕн пĕр шухăшлă пулса тата ялан çине тăрса кĕрешни вĕсене çĕнĕ çутă пурнăç тума май парать.

США-ри СУЙЛАВ УМĔНХИ КАМПАНИ

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче США-ра президент тата вице-президент суйлавĕ пулмалла (США конституцийĕ тăрăх президент суйлавĕ високоснăй çулта, ноябрьти малтанхи ытларикун пулса иртет). Çав вăхăтрах палатăсен представителĕсен (кĕçĕн палатăн) пĕтĕм составне тата сенаторсен виççĕмĕш пайне çĕнĕрен суйлаççĕ. Халĕ США-ра суйлав умĕнхи кампани пуçланнă. Демократсен партийĕн съезчĕ пулса иртнĕ ĕнтĕ. Августăн 20-мĕшĕнче Америкăри иккĕмĕш, влаçра тăракан партин—республиканецсен съезчĕ пуçланать. Çак съездсенче партисен суйлав программисене йышăнаççĕ тата президент пулма тата конгрессменсем пулма суйламалли кандидатсене тăратаççĕ.

США-ри ĕççынни массисем пулас суйлавран хăйсемшĕн ыррине нумай кĕтме пултараймаççĕ. Влаçра тăракан партисем иккĕшĕ те монополистла капиталăн интересĕсемшĕн тăраççĕ. 1912 çултах В. И. Ленин çапла кăтартса панă: США-ри «икĕ партиллĕ система» текенскер... рабочисен хăйне тĕллĕн ĕçлекен партийĕ, урăхла каласан, чăн-чăн социалистла парти чăмăртанассине чăрмантаракан чи хăватлă меслетсенчен пĕри пулнă» тата США-ра суйлав вăхăтĕнче «буржуаллă икĕ парти пĕр-пĕрне хирĕç хитре тата ним шухăшсăр сăмахсем каласа хирĕçнипе халăха улталанă, ăна хăйĕн чи кирлĕ интересĕсенчен пăрса янă».

Унтанпа США-ра ку енĕпе нимĕн те улшăнман. США-ри ĕççыннисем хăйсен парламентĕнчен пурнăçра мĕн илнине çак тĕслĕх кăтартса парать: нумаях пулмасть 84-мĕш созыври конгресăн сессийĕ пулса иртнĕ. «84-мĕш созыври конгресс çитес суйлавра партисенчен хăшне те пулин мухтама май паракан нимĕнле закон та йышăнма пултараймарĕ», тесе çырчĕ «Нью-Йорк таймс» хаçат. Чăнах та, конгресс ĕçĕ США-ри ĕççыннисенчен никама та хаваслантармасть. Конгресс çар ĕçĕ валли уйăрса паракан укçан хисепне виçĕ миллиард доллара яхăн, ССР Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç сăтăрла ĕçсем тума уйăрса паракан укçан хисепне 25 миллион доллар чухлĕ ӳстерчĕ. Рабочисемшĕн сиенлĕ Тафта-Хартли законĕ çумне хушса çырмалли тӳрлетӳсене тата гражданисен прависем çинчен калакан, тĕрлĕ расăсен правине хӳтĕлекен закон проектне конгресс йышăнмарĕ.

США-ри влаçра тăракан ушкăнсем Америкăри Коммунистсен партине — ĕççыннисен пĕртен-пĕр партине — ирĕклĕн ĕçлеме чăрмантаракан йĕрке туса хучĕç. Мĕнле ӳт-тĕсне кура хĕсĕрлес йĕрке, пурлăхсăр çынсене суйлав прави паманни тата ытти пăлхусем—çавсем пурте ĕççыннисене суйлава хутшăнма питĕ чăрмантараççĕ. США-ри çынсенчен 40 процентĕ суйлавра сасăлама хутшăнаймасть.

Демократсен партийĕн кăçалхи съезчĕ çакна тата тепĕр хут кăтартса пачĕ: тулашри тата шалти политика тĕлĕшĕнчи тĕп хирĕçӳсем республиканецсемпе демократсен партийĕсем хушшинче пурри палăрсах каймасть, ку партисенчи тĕрлĕ кандидатсем майлă тăракансем хушшинче тата кандидатсем хушшинче çавăн пек хирĕçӳсем пурри ытларах палăрать. Демократсен партийĕн съездĕнче, сăмахран, çак парти президента суйлама тăратнă кандидат Эдлай Стивенсон майлисем республиканецсенчен тăракан хальхи правительствăна та, Стивенсон вырăнне кандидата тăратма сĕннĕ, анчах сасăланă чухне кирлĕ чухлĕ сасă илеймен пирки кандидата лекмен Америкăри питĕ пуян монополиста Гарримана та критикленĕ. Республиканецсен партийĕн съездĕнче США вице-президентне суйлама хальхи вице-президента Никсона кандидата тăратассишĕн тăракансемпе ăна хирĕç пыракансем хушшинче тавлашусем пуласси кĕтеççĕ.

Кунпа пĕрлех çакна палăртмасăр хăварма çук: икĕ партин хăшпĕр представителĕсем съездсенче тухса каланисем США халăхĕн анлă сийĕсен шухăш-кăмăлне палăртаççĕ. Çапла, демократсен партийĕн съездĕнче Роберт Натан тухса каланă. Вăл США правительстви «пактсен нумайрах тăвасшăн, çар пакчĕсемпе базисен шутне ӳстерме тăрăшать, çавăн чухне вăл хăй мĕн тунăшăн халăх ытларах пăшăрханассине шута илмест», тенĕ.

Суйлав умĕнхи кĕрешӳ вăхăтĕнче Америкăри влаçра тăракан партисен иккĕшĕн те ирĕксĕрех США халăхĕ хушшинче çирĕп миршĕн, ĕç пулмалла тăвассишĕн, çĕршывра демократилле правăсене чакнипех пурнăçлассишĕн тăрас шухăш-ĕмĕт вăйланса пынине шута илме тивет. Çакă вара, ним иккĕленмелли те çук, суйлав кампани вăхăтĕнче тата суйлавра хăйĕн йĕрне хăварĕ.

А. ШАТИЛОВ.

ÇАМРĂКСЕМПЕ СТУДЕНТСЕН ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ VI ФЕСТИВАЛЬНЕ ХАТĔРЛЕНЕС ТЕЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН УЧРЕДИТЕЛЬНĂЙ КОМИТЕТ ЛАРĂВĔ

ПĔЛТЕРНИ

Çамрăксемпе студентсен Пĕтĕм тĕнчери улттăмĕш фестивальне хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн учредительнăй ларăвĕ 1956 çулхи августăн 14-мĕшĕнче Мускавра уçăлнă. Ларăва Говинд Сахаи господин—«Бхарат Ювак Семадж» (Инди) организаци руководителĕ председатель пулса ертсе пынă. Лару августăн 16-мĕшĕнчен ĕçленĕ.

Ларăва 59 çĕршывран 126 делегатпа кăнаçă хутшăннă. Çав шутра çамрăксемпе студентсен тĕрлĕ организацийĕсен, обществăлла организацисен представителĕсем, культурăпа спорт представителĕсем пулнă.

Пĕрлехи ларусенче фестивале хатĕрленес ыйтусем тăрăх, унăн программи пирки 37 оратор тухса каланă. Ыйтусене ирĕклĕн, пĕр-пĕрне ăнланса сÿтсе явнă, пурте пĕр шухăшлă пулма тăрăшни палăрнă.

Ораторсем улттăмĕш фестивале организацилессине пĕр кăмăллă пулса ырланă. Ку вăл пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине, сыхăну тытассине вăйлатма, пĕр-пĕрне лайăхрах ăнланса илме пулăшать. Çакăнна пурте килĕшнĕ: фестиваль мĕнпур организацисемшĕн, мĕнпур çамрăксемшĕн, вĕсем мĕнле политикăлла шухăш, мĕнле тĕн тытнине, хăш расăпа наци сынни пулнине пăхмасăр, пуриншĕн те усă пулать. Хатĕрленÿ комитечĕ çамрăксемпе студентсен пĕтĕм тĕнчери улттăмĕш фестивальне 1957 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа августăн 11-мĕшне çитиччен Мускавра ирттерме йышăннă.

Тĕрлĕ комиссисем кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусене тĕплĕн сÿтсе явнă, фестивалĕн пĕтĕмĕшле программине, студентсем валли ятарласа хатĕрленĕ программăна, художествăллă конкурссен программине, спорт программине туса хатĕрленĕ, фестиваль çинчен пĕлтерсе тăрас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине, çав шутра фестивалĕн пĕтĕм тĕнчери фондне туса хума палăртнă.

Комиссисенче сÿтсе явнă хыççăн сĕнÿсене ырлама юлашки пĕрлехи пухăва тăратнă.

Тĕнчери çĕршывсен хатĕрленÿ комитетне туса хунă. Унăн составĕнче—çамрăксен тĕнчери организацийĕсемпе уйрăм çĕршывсенчи организацийĕсен руководителĕсем, культурăпа спортăн паллă деятелĕсем, обществăлла деятельсем. Малашне фестивале тата ăна хатĕрленес ĕçе хутшăнма кăмăл тăвакан тĕрлĕ вăйсем тĕнчери çĕршывсен хатĕрленÿ комитечĕнче ĕçлеме пултараççĕ.

Хатĕрленÿ комитечĕ Вардино Янис господин, Грецири либералла-демократилле парти депутачĕ тăратнă чĕнсе калание пичетлесе кăларма йышăннă. Унта пĕтĕм тĕнчери çамрăксене, çамрăксемпе студентсен организацийĕсене çамрăксемпе студентсен Пĕтĕм тĕнчери улттăмĕш фестивальне—мирпе туслăхшăн тăнине палăртмалли фестивале хутшăнма чĕннĕ.

Мускав, 1956 çулхи августăн 16-мĕшĕ.

ÇАМРĂКСЕМПЕ СТУДЕНТСЕН ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ VI ФЕСТИВАЛЬНЕ ХАТĔРЛЕНЕС ТЕЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕТ

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Халĕ çынсене сывлама çăмăлрах. Халăхсем пĕр-пĕрне ытларах ăнланма, шанма пуçларĕç, вĕсен туслăхĕ ÿссе пырать, вĕсем пĕрле тăвакан ĕçсем нумайланаççĕ, пĕр-пĕринпе час-часах тĕл пулса калаççĕ. Çак условисенче çамрăксем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлеме, туслă тата мирлĕ пулма ытларах та ытларах тăрăшаççĕ.

Пирĕн Мускаври тĕлпулу шăпах çакăн пек условисенче иртрĕ. Хамăрăн шухăшсене асра тытса, эпир, тĕрлĕ çĕршывсенчи çамрăксемпе студентсен тĕрлĕ юхăмĕсен, культура, спорт, профсоюз организацийĕсемпе ытти пĕрлешÿсен представителĕсем çакăнта пухăнтăмăр.

Çамрăксен чи хаклă ĕмĕчĕсене пĕрле пурнăçлас тĕлĕшпе тăрăшса, эпир Мускавра, 1957 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа августăн 11-мĕшне çитиччен, çамрăксемпе студентсен мирпе туслăхшăн кĕрешмелли Пĕтĕм тĕнчери VI фестивальне ирттерме йышăнтăмăр.

Эпир çапла калатпăр: VI фестивале мĕнпур çамрăксем, — вĕсем мĕнле шухăшлине, расине, вĕсем мĕнле тĕн тытнине, хăш национальность сынни пулнине пăхмасăр,—пурте хутшăнма пултараççĕ. Фестивальре мĕнле те пулин политикăлла, философилле тата ытти шухăшсем пуçпулăс тăмаççĕ. Фестиваль пĕр-пĕрне хисеплениле, ăнланнине, мĕнпур çĕршывсенчи çамрăксем туслă пулнине иртет. Унăн программи çамрăксен тĕрлĕ ушкăнĕсемпе сийĕсен ĕмĕчĕсемпе интересĕсене палăртса тăрать.

Программăра туслă тĕлпулусем, пĕр пек профессиллĕ çынсен тĕлпулăвĕсем, культура, тĕн енĕпе ирттерекен тĕлпулусем пулма пултараççĕ, дискуссисем, семинарсем, конкурссем, художествăллă выставкăсем ирттерме палăртнă. Вĕсем халăхсен наци культурине, çĕнĕ талантсене палăртма пулăшĕç. Çавăн пекех спорт программине, экскурсисем ирттермелли тата ытти ĕçсен программине палăртнă. Татах та çĕнĕрен тĕрлĕ сĕнÿсем пани çак программăна пуянлатĕ. Çак сĕнÿсене эпир мĕнпур çамрăксенчен, вĕсен организацийĕсенчен, фестивальне интересленекен мĕнпур çынсенчен кĕтетпĕр. Фестиваль вăхăтĕнче çамрăксен спорт енĕпе ирттерекен вăййисем пулаççĕ. Вĕсене ССР Союзĕн олимпиада комитечĕ организацилет.

Эпир çак ĕçе организацилесе ирттерме Пĕтĕм тĕнчери фестивалĕн хатĕрленÿ комитетне туса хума йышăнтăмăр. Комитетра ĕçлеме фестивале хатĕрлеме хутшăнма кăмăл тăвакан мĕнпур вăйсем хутшăнма пултараççĕ.

Эпир фестивале хатĕрленес ĕçпе сыхăнса тăракан задачăсене татса памашкăн Мускавра ялан комисси турăмăр.

Эпир тĕнчери мĕнпур çамрăксене, мĕнпур организацисене çапла чĕнсе калатпăр: VI фестивале пĕрле хатĕрлесер, кашни организацие тивĕçлĕ формăсемпе тата меслетсемпе усă курса ĕçлер. Фестивале хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур çынсене пĕрлештерсе тăракан хатĕрленÿ комитечĕсем туса хурăр! Пĕтĕм çĕршывĕпе тата ыранĕсенче çак енĕпе тĕрлĕ ĕçсем пуçарма тăрăшăр! Мускава делегацисем яма укса пухма тытăнăр!

Йывăр условисенче пурăнакан çĕршывсенчи çамрăксене фестивале хутшăнма май парас тесе, вĕсем хăйсен йăлисемпе наци культурине кăтартса пама пултарччăр тесе, эпир фестивалĕн пĕтĕм тĕнчери фондне тума йышăнтăмăр. Эпир мĕнпур çамрăксене, мĕнпур организацисемпе учрежденисене çак фонда хăйсене тивĕçлĕ вăй хума чĕнетпĕр.

Хаклă тусем, çамрăксемпе хĕрачасем!

Çамрăксемпе студентсен Пĕтĕм тĕнчери VI фестивальне ăнăçлă ирттерессишĕн мĕнпур çамрăксем тăрăшаççĕ. Эпир пĕрле тăвакан ĕç çакăн патне илсе çитертĕр: 1957 çулхи август уйăхĕнчи илемлĕ кунсенчен пĕринче пирĕн пурин те: эпир çамрăксен телейĕпе юхăмĕшĕн, туслăхпа миршĕн лайăх тăрăшса ĕçлерĕмĕр, тесе калама май килтĕр.

Сывă пулăр, Мускавра тĕл пуличчен!

ГЕРМАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИНЕ ĔÇЛЕМЕ ЧАРНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕÇÇĔ

БЕРЛИН, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕçсынисем хытă протестлеççĕ.

Дрезден хулинче пысăк митинг пулнă. Унта темиçе пин çын пухăннă. Митингра Хĕвеланăç Германипе Австрири металлистсен представителĕсем пулнă. Митингра пулнă халăх Хĕвеланăç Германири ĕçсынисене Бонри влаçсен киревсĕр ĕçĕсене хирĕç тăтăклăн кĕрешме чĕннĕ.

Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç протест тăвакансен Потсдамри митингĕнче вунă пин çын ытла пулнă. Германири социал-демократсен партийĕн правленине янă телеграммăра митинг участникĕсем социал-демократсене ĕçсынисен демократилле прависемпе ирĕклĕхĕшĕн активлă кĕрешме чĕнеççĕ.

Çавăн пекех республикăри ытти хуласенче те митингсем пулса иртнĕ.

Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарни çине ответлесе, Демократиллĕ Германи Республикинчи нумай ĕçсынисем хăйсене Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн членне илме ыйтса заявленисем панă. Сăмахран, Сталинштадтри металлурги комбинатĕнче ĕçлекен 60 рабочи, Биттерфельдри электротехника комбинатĕнче, Потсдамри Карл Маркс ячĕпе тăракан заводра, Берлинри «ДЕФА» киностудийĕнче тата ытти предприятисенче ĕçлекен вуншар ĕçсынисем парти ретне илме ыйтса заявленисем панă.

НИМĔÇ ХАЛĂХĔ ПРОТЕСТЛЕТ

БЕРЛИН, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германи влаçĕсем Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç Демократиллĕ Германи Республикинчи нумай хуласенчи халăх протестлет.

Магдебургри митинга çĕр пин çын пухăннă. Росток хулинчи митингра Германири Коммунистсен партийĕн Гамбургри организацийĕн пĕрремĕш секретарĕ Г. Финк çакна палăртнă: влаçсем хĕсĕрлеççĕ пулсан та, Коммунистсен партийĕ малалла кĕрешĕ.

Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç протестлеме Карл Маркс-штадтри ĕçсынисем митинг туса ирттернĕ. Митингра 80 пин çынна яхăн пулнă.

Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç Галльре, Эрфуртра, Веймарта, Сталинштадтра, Баутценра, Эйслебенра тата Демократиллĕ Германи Республикинчи ытти нумай хуласенче ĕçсынисен митингĕсем пулса иртнĕ.

РУМЫНИРИ МТС-сем

БУХАРЕСТ, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). 1948 çулта Румыни Халăх Республикинче 76 МТС пулнă. Халĕ унта 231 МТС шутланать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах тракторсемпе ялхуçалăх машинисен хисепĕ ÿссе пырать. Хальхи вăхăтра МТС-сенче 13.445 трактор, 8.275 молотилка, 543 комбайн ĕçлет. Румынире механизаторсем вĕрентсе хатĕрлекен виçĕ çуллăх шкулсем 46. Вĕсем кашни çулах 2.500 механике яхăн вĕрентсе кăлараççĕ. Вуншар пин механизаторсем кĕске срокла курссенчен вĕренсе тухнă.

ПОЛЬША ÇАМРĂКĔСЕН УШКĂНĔ СОВЕТ СОЮЗĔН ХĔВЕЛТУХĂÇ РАЙОНĔСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТМЕ КИЛНĔ

ВАРШАВА, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн хĕвелтухăç районĕсенче тырпул пухса кĕртме Польша çамрăкĕсен ушкăнĕ тухса килнĕ. Унăн составĕнче—машина-трактор станцийĕсемпе государство ялхуçалăхĕсен механизаторĕсем, производствăллă çĕрĕç кооперативĕсен членĕсем тата единоличник-хресченсем.

Тĕрлĕ хыпарсем

Куславкка районĕнчи «Ударник» ялхуçалăх артель членĕсем пĕлтĕр хăйсен укçипе 20 çĕнĕ çурт лартрĕç. Вĕсем хушшинче—колхозра ялан тăрăшса ĕçлекенсем Н. Московкина, И. Веденский, Н. Сидоров, А. Ярухина т. ыт. те.

Н. ОРЛОВ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 70 çулхи С. Захаров колхозника ялан колхоз уй-хирĕнче курма пулать. Иртнĕ çулта вăл 170 ĕçкунĕ тунă, кăçал ку таранччен 80 ĕçкунĕ турĕ ĕнтĕ.

Правлени хастарлă колхозника темиçе хутчен те премиленĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозăн (Çĕмĕрле районĕ) улма-çырла сачĕ пур. Колхоз кăçал хурлăхана хăмла çырли сутса 13 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

В. МАРТЫШИН.

Красноармейски районĕнчи «Хĕрлĕ Шетмĕ» колхозра пурçăн хурчĕ ĕрчетеççĕ. Уйрăмах М. Овчинникова ертсе пыракан звено лайăх ĕçлет. Ку звено пĕлтĕр плана 143 процент тултарнă, 18 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Пурçăн хурчĕ ĕрчетекенсем кăçал 20 пин тенкĕ ытла тупăш илме палăртнă.

Н. ИВАНОВ.

Кăçал Йĕпреç районĕнчи чылай клубсенче (уйрăмах Энеç, Пучинке, Кĕлĕмкасси, Çирикли тата ытти ялсенче) чăваш музыкин аталанăвĕ çинчен лекцисем пулса иртрĕç. Лекцисене Шупашкарти Ф. П. Павлов ячĕпе тăракан музыка училищинче вĕренекен Г. Маркинов вуларĕ. Лекцисене ялти çамрăксем пысăк тимлĕхпе итлеççĕ.

В. ДОЛГОВ, О. ХРАМОВ.

«Дружба» колхозри (Шăхасан р.) Г. Наумов пиллĕкмĕш çул шофер пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Кашни çул пĕрер çамрăка шофер ĕçне вĕрентсе хатĕрлет.

Наумов юлташ государствăна тырă панă вăхăтра 25 километра куллен 5—6 рейс турĕ. Çапла, вара колхоз районта государствăна чи малтан тырă парса татрĕ.

Х. ГОРДЕЕВ.

Чурачăк районĕнчи профактивăн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВЦСПС пиллĕкмĕш тата Чăвашоблпрофсоветăн иккĕмĕш пленумĕсен ĕçĕсене сÿтсе явнă.

М. КСЕНОФОНТОВ.

ЙĔПРЕÇ. Хураналти ялпо продавщици Клавдия Парамонова тавар çавăрăнăш планне кварталсерен квартала ирттерсе тултарать. Вăл июль уйăхĕнче планран ирттерсе икĕ пин тенкĕлĕх ытла тавар сутнă. Тырă вырнă вăхăтра вăл колхозниксене кирлĕ таварсене хире тухса сутать. Çапла К. Парамонова колхозниксем патне хире тухса пĕр кун хушшинчех 2.155 тенкĕлĕх тĕрлĕ таварсем сутрĕ.

Г. РИКМАС.

Çак кунсенче Чăваш АССР Культура министерстви организациленĕ картинăсен выставки Елчĕк районĕнчен Чкаловски районне куçса килчĕ. Кунта пурĕ 4 кун, августăн 4—7-мĕшĕсенче пулчĕ. Выставкăна пурĕ 25 произведени тăратнă. Картинăсене ĕçсынисем пысăк тимлĕхпе пăхрĕç, Уйрăмах вĕсем М. С. Спиридоновăн «Заволжский пейзаж», «Над Волгой» картинисене, Р. М. Ермолаева художницăн «Юннатка», «Весна. Ледоход на Волге», В. В. Беляевăн «Старая переправа», «Лес» тата «Летнее утро» пейзажĕсене, М. И. Крыловăн «Пионеры в походе», В. С. Баталовăн «Байкал», И. Яковлевăн «Сармантей» ятлă юмахĕ тăрăх ÿкернĕ картинисене ырларĕç.

К. ВОРОБЬЕВ.

ВАРНАР. Ершепуçĕнчи «Первое Мая» колхоз членĕ П. Краснов 14 çул хушши пĕр улшăнмасăр лашасем пăхать. Опытлă конюх çамрăксене те выльăхсене юратса пăхма вĕрентет. Колхоз правленийĕ Краснова темиçе хут та премиленĕ.

А. ТИМОФЕЕВ.

Канаш районĕнчи Уйкас ялĕнчи колхозниксем пурнăçĕ лайăхланса пынă май, вĕсем çĕнĕ çуртсем лартаççĕ. Н. Кузьмин тракторист çĕнĕ пурте пурăнма куçрĕ. В. Алексеев тракторист пура тупнă. А. Егорова колхозница пĕлтĕр çĕнĕ пÿрт лартрĕ, кăçал ывăлĕ валли пÿрт тума пура илчĕ.

Я. ЛОГИНОВ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозри (Советски р.) кăçал строительство бригади пахча çимĕç хумалли хранилище, кормозапарник туса пĕтерчĕ. Халĕ строительсем 40 ĕне валли вите тума тытăнчĕç.

В. ЖУЧКОВ.

Куславкка райпотребсоюзĕн хатĕрлекен кантурĕ пахча-çимĕç тăварлама катка-пичке тумалли плана ирттерсе тултарнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Г. Орлов бондарь пичке тăвать. Вăл кулленхи нормăна 250—300 процент тултарать.

И. Казаков фотоÿкерчĕкĕ.

Çĕр айĕнчи вĕри пăс

Кăçалхи çуркунне Çĕр айĕнчи ăшăна тĕпчес тĕлĕшпе Мускавра Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш канашлу пулса иртнĕ. Вăл çĕр айĕнчи хăватлă ăшăна пурнăçра усă курас ыйтăва сÿтсе явнă.

Италире геотермоэлектростанцисем пур. Çав станцисен турбинисем çĕр айĕнчи вĕри пăспа ĕçлеççĕ. Çĕр айĕнчи пăс ятарласа пăраланă скважина тăрăх вăйлă тапса тăрать. Çапла майпа туса кăларнă электричество энергийĕ йÿнĕ ларать.

Пирĕн çĕршывра та геотермоэлектростанцисем лартма шутлаççĕ. Вĕсем Инçет Хĕвелтухăç районĕсемшĕн уйрăмах пахă пулма пултараççĕ.

Пирĕн çĕршывра çĕр айĕнче вĕри шыва вĕри пăс питĕ нумай тупса палăртнă. Вĕсемпе ялхуçалăхĕнче те, промышленноçра та, пурнăçра та анлăн усă курма май пур. Хăшпĕр çĕршывсенче пÿрт-çуртсене çĕр айĕнчи вĕри пăспа ăшăтса пурăнаççĕ те ĕнтĕ.

«Ленинградская правда» хаçатран.

ФУТБОЛ

Çурмафиналти вăййă

Иртнĕ вырсарникун Шупашкарти «Энергия» спорт обществи стадионĕнче футбол енĕпе республика кубокне илмелли çурмафиналти пĕрремĕш вăййă пулчĕ. Çĕмĕрлери «Красная звезда» спорт обществин футбол командипе Шупашкарти динамовецсем тĕл пулса выляреç.

«Красная звезда» командин спортсменĕсем малтанхи таймра пĕрмаях тенĕ пек тапăнса выляреç. Çур сехет иртсен, вĕсем пĕр мечка тапса кĕртрĕç. Иккĕмĕш таймра «Динамо» командин футболисчĕсем тăрăшарах выляни курăнчĕ. Вĕсем вăйă шутне таплаштарчĕç çеç мар, ăмăрту вĕçленес умĕн иккĕмĕш мечка тапса кĕртрĕç.

Çĕмĕрле команди, Н. Солдатченко судьяна килĕшмесĕр, вăййа пăрахăçа кăларма ыйту тăратнăччĕ. Физкультурăпа спортăн республикăри комитечĕ çумĕнчи футбол секцийĕ, çак ыйтăва пăхса тухса, вăййă шутне тĕрĕс тесе йышăннă. Çапла ĕнтĕ, Çĕмĕрлери «Красная звезда» спорт обществин команди футбол енĕпе республика кубокне илмелли ăмăртуран тухрĕ.

Суд

Йывăç вăрласа сутнăшăн

А. Такташкин, Ф. Паукин тата лесник пулса ĕçленĕ В. Ключников—виççĕшĕ пĕрле, 1956 çулта государство вăрманне вăрласа, хаклă хакпа сутса пурăннă.

Первомайски районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухнă. А. Такташкина 12 çуллăха, Ф. Паукинпа В. Ключникова 10-шар çуллăха хупмалла тунă.

Е. ВОЛКОВА.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

Ватă бандажник

Канашри вагонсем юсакан завода пырса кĕнĕ чухне сулахай енче Хисеп тата кăтарту хăмисене куратăн. Вĕсенче производствăра малта пыраканĕсен ячĕсене çырса хунă. Унта кустăрма цехĕнчи Игнатий Федорович Герасимов бандажник сменăри нормăна 250 процент тултарнине паллă тунă.

Заводăн цехĕсенче пиншер çын ĕçлет. Кустăрмана бандажсем лартнă çĕрте вара ултă çын кăна. Вĕсенчен чи ватă бандажник И. Герасимов юлташ шутланать. Кунта кивĕ кустăрмасене çĕнетеççĕ, юсаççĕ, çĕнĕрен бандажсем тăхăнтараççĕ. Ĕçĕ йывăрах мар темелле, анчах вăл та тĕрĕс, тĕплĕ тумалли ĕç, унсăрăн чугун çул çинче авари пулма пултарать.

Завода ĕçе ярсанах цехри пĕтĕм ĕçе алă вĕççĕн тунă. Халĕ кустăрмасене кранпа çĕклеççĕ, электричество вăйĕпе усă кураççĕ. Малтан опытлă рабочисем пулман. Халĕ мастер пулса ĕçлекен Б. Семенов юлташ çеç уи чухне бандаж ĕçне тума пултарнă.—Мана та бандаж тума вăл вĕрентрĕ,—калаçа парать бандажник.

Халĕ Герасимов юлташ паллă производственникĕсенчен пĕри. Вунтăхăр çул хушшинче сахал мар ĕç тунă, опыт пухнă. Вăл хăйĕн пахa опытне ытти рабочисем хушшинче сарма тăрăшать. Герасимов юлташ хăй вĕрентнĕ бандажниксен шутне те пĕлмест.

— Акă И. Ермолаев, Н. Косов, Г. Иванов, В. Петров юлташсем пĕр çемьери пиччĕшĕпе шăллĕсем пек килĕштерсе ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте манăн ученикĕсем,—тет ĕста бандажник.

Ĕста рабочисен ячĕсене ялан заводăн Хисеп хăмине хисеп кĕнеки çине çырса хураççĕ.

И. ЖУРАВЛЕВ.

Силос хываççĕ

ВĂРНАР. Кольцовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем ăнса пулнă кукурузăран силос вăхăтра хывса хăварма тăрăшаççĕ. Вĕсем силос хывмалли траншейăсемпе шăтăксене тасатрĕç тата çĕнĕрен чавса хатĕрлерĕç. Халĕ колхозра кукурузăран силос хывас ĕç пырать. Силоса пĕр вăхăтрах пур фермăсенче те хываççĕ. Сысна ферминче ĕçлекенсем кукурузăна ХТЗ-7 трактортан кăларнă косилкăпа çулса, силосорезкăпа вĕтетсе шăтăка тултараççĕ. Ĕне ферминче ĕçлекенсем те комбайнпа кукуруза çулса силос хываççĕ. Колхоз кашни кунах 300 тоннăран кая мар силос хывать.

Н. ПАШИН.

ОКТЯБРЬСКИ. «Знамя» колхоз членĕсем кăçал тухăçлă кукуруза ÿстерчĕç. Колхозниксем силос хывма кирпĕчпе цементран 50-шар тонна кĕрекен икĕ шăтăк турĕç. Çак кунсенчех тата виçĕ шăтăк туса пĕтереççĕ.

В. ТРОФИМОВ.

17 ÇУЛ ПĔР ĔÇРЕ

СОВЕТСКИ. Суворов ячĕпе тăракан колхоз членĕ И. Чернов 17 çул шофер пулса ĕçлет. Вăл çак хушăра Совет Çарĕнче, МТС-ра, КПСС райкомĕнче шоферта пулнă. Кирек ăçта ĕçлесен те ăна мухтаса ырланă. Совет Çарĕнчен кăна вăл 8 грамота илсе килнĕ.

Аван ĕçленине кура юлашки вăхăтра колхозниксем Чернов шофера хăйсен колхозне чĕнсе илнĕ. Халĕ вăл «ГАЗ-51» машинăпа ĕçлет. Машинăна тирпейлĕ тытнăшăн, çул çинче йĕркеллĕ çÿренĕшĕн, пур ĕçе те вăхăтра туса пынăшăн ăна колхоз ĕçченĕсем юратаççĕ.

Ф. МАРКОВ.

ЧĔРЕ ВЫРĂННЕ МАШИНА

Кăçалхи августăн 4-мĕшĕнче «Московская правда» хаçатра çак ятпа статья пичетленсе тухнă. Унта экспериментальнăй хирурги аппаратурипе инструменчĕсен наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ М. Ананьев хирургин çĕнĕ аппарачĕсем çинчен каласа панă. Эпир вăл каласа панине кĕскен куçарса пичетлетпĕр.

Пирĕн хирургсем ку чухне чĕрене касса кăткăс операцисем тăваççĕ. Чĕре вăл ытти органсем пек мар, операци тунă хушăра та ĕçлеме чарăнмасть. Тымарсем тăрăх юн çÿреме чарăнсан çын вилсе каять.

— Пирĕн институт искусственнăй чĕре шутласа кăларчĕ,—тет М. Ананьев юлташ. Аппарат чăн - та чĕре пекрех. Вăл чĕре евĕр тапса юн хăвалама пултарать. Ку вăл юнсăр хăварнă «типĕ» чĕрене касса операци тума май парать.

«Искусственнăй чĕре» питех те кăткăс аппарат. Унта темĕн тĕрлĕ прибор та пур: чĕре мышцисем вырăнне ĕçлекен насос, «искусственнăй ÿпке», сывлăха сăнакан приборсем т. ыт. те. Çак аппарат чĕрере калама çук йывăр, халиччен май килмен операцисем тума май парать.

Питех те кăткăс операци тăваççĕ... Чĕри тапма чарăнас патнех çитет, çынни сывлăш кăларса ярасси çеç юлать, тейĕпĕр. Çакăн пек чухне вара «искусственнăй чĕре» çын чĕрине пулăшма пултарать.

Çĕнĕ прибор организмра хăвех кирлĕ пек режим тытса тăрать. Сăмахран, операци тутаракан çыннăн юн тымарĕ вăйсăрланнă пултăр. Аппарат çавăнтах тымарсем тăрăх ытларах юн хăваласа нормăна çитерет. Юн тымарĕ ытлашши вăйлă тапма пуçласан, аппарат хăйхи юн çÿрессине вăйсăрлатать.

«Искусственнăй чĕрене» халĕ клиникăра сăнаса, тĕпчесе пăхмалла. Институт коллективĕ хальхи вăхăтра çак аппарата лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлет.

Сын чĕри мĕнле ĕçленине врач пур чухне те тĕп-тĕрĕс каласа пама пултараймасть. Врач чĕре ĕçленине итлеме, юн тымарĕнчен тытса чĕре тапнине сăнама, электрокардиограмма тума, рентгенпа ÿкерсе илме пултарать. Анчах çаксем чĕрене час-часах çителĕклĕ усса параймаççĕ. Мĕнпе чирленине тĕрĕс палăртас тесен, «чĕре тĕпне» кĕрсе курмалла. Çакна валли шутсăр пĕчĕк аппарат шутласа кăларнă—вăрăм катетр çине йĕп сăрти пек дачик-электрозонд тăхăнтарнă. Дачик урлăшĕ 2,5 миллиметр, унăн пайĕсем ал çине сыхса çÿрекен сехет пайĕсенчен нумай пĕчĕкрех. Дачик çав тери пĕчĕк япала пулин те, унта электрохуçалăха мĕн кирли пурте пур: индукцилле катушкăсем, якорьсем т. ыт. те. Çак аппаратпа усă курма йывăр мар. Венăна уçса датчика катетрпа пĕрле юн тымарĕ тăрăх чĕре патне кĕртсе яраççĕ. Чĕре мĕнле ĕçлени сутăлса тăракан экран çине ÿкет, врач вара сăнаса тăрать.

Çакăн пек приборсене А. Н. Бакулев профессор клиникинче тĕрĕслесе пăхнă хыççăн йышлăн туса кăларма тытăннă.

Питех те кăткăс операци вăхăтĕнче чĕре тепĕр чухне «сикке тапма» пуçлать—çын вилес умĕнхи пек ăшталанма тытăнать. Çакăн пек чухне хирург чĕрене массаж тума çеç пултарнă, анчах вăл çынна вилĕмрен çăлса хăварма пултарайман. Халĕ аппарат-дефибриллятор шутласа кăларнă. Çак прибор чĕре витĕр питĕ хăвăрт электричество токĕ ярать. Çапла вара чĕре сикке тапма чарăнать, вилĕм хăрушлăхĕ иртсе каять. Ку аппаратпа хăшпĕр клиникăсенче аван усă кураççĕ.

Юн тымарĕсене çĕлекен аппарат шутласа кăларни институтăн пысăк çитĕнĕвĕ пулса тăрать, тесе калamalla. Врачсем ку таранччен ытлашши çинçе юн тымарĕсене çĕлеме пултарайман. Аппарат çак кăткăс ĕçе тума пулăшать. Халĕ ĕнтĕ юн хытса капланнă тымарсене касма, органсене куçарса лартма, искусственнăй пыр хартса пама т. ыт. тума та май пур. Иркутск хулинче пурăнакан К. рабочи темлерен трамвай айне пулнă. Унăн пĕр ури ÿт çинче çеç аран-аран тытăнса тăнă. Трамвай татса кайнă урана врачсем халĕ кăна асăннă аппаратпа чиперех сыпса лартнă. Халиччен врачсем çавăн пек операци çинчен ĕмĕтленме çеç пултарнă.

Наркоз организма сиен кÿнине пурте пĕлеççĕ. Çакăнтан хăтăлас майпа электроыйхă валли аппарат хатĕрлеççĕ. Чирлĕ çын куçĕсемпе ĕнси çине электродсем хурса йăваш ток яраççĕ. Çак ток центральнăй нерва системи витĕр тухса çынна çывратса ярать. Çывракан çынна вара операци тумалли пÿлĕме илсе каяççĕ. Çавăнтах операци тумалли вырăна ыратми тăваççĕ. Çапла вара, çын операци пуçланассине сисмесĕрех юлать. А. В. Вишневский ячĕпе тăракан институтра çак аппаратпа ăнăçуллăн усă кураççĕ.

Халĕ тата вăйлăрах ток—электронаркоз яракан аппарат тăваççĕ. Çак аппарат çынна йывăр ыйха путарать, вăл вара ыратнине пачах пĕлми пулать. Электронаркозпа шутсăр кăткăс операци тума май пурри курăнса тăрать.

Институт работникĕсем хăйне майлă телевизор шутласа кăларчĕç. Çапла вара операци тунине студентсемпе врачсем инçетрен пăхса ларма пултараççĕ. Çак телевизора телецентр кирлĕ мар, электричество çеç кирлĕ.

Пирĕн халĕ организма шăнтса операци тумалли аппарат та пур.

Республикăри экрансем çинче

часах çĕнĕ илемлĕ фильм

„ИЗ-ЗА ЧЕСТИ“

кăтартма пуçлаççĕ.

Фильма Александр Ширванзаде драми тăрăх ÿкернĕ.

Рольсене çак артистсем выляççĕ:
Г. Нерсесян, В. Вардересян, Х. Назаретян тата ыттисем.
Ереванри илемлĕ фильмсен киностудийĕ 1956 çулта туса кăларнă.

К и н о

«РОДИНА». Августăн 21-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче илемлĕ фильм «Есть такой парень», каçхи сеанссенче — «За власть Советов».

Августăн 20-мĕшĕнчен пуçласа 1957 çул валли халăх демократи çĕршывĕсенче тухса тăракан хаçатсемпе журналсем çырăнса илме подписка йышăнаççĕ.

Подпискăна Союзпечатĕн çак хуласенчи уйрăмĕсенче: Шупашкар, Канаш, Улатăр, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ тата çак район центрĕсенче йышăнаççĕ: Вăрмар, Пăрачкав, Йĕпреç, Куславкка, Вăрнар.

Ытти районсенче пурăнакансем Союзпечатĕн сывăх хулари е район центрĕнчи уйрăмĕнче çырăнса илме пултараççĕ.

Союзпечатĕн республикăри пайĕ.

Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ колхозсемпе колхозниксенчен пахча çимĕç килограммне пуçне çак хакпа сутăн илет:

1. Хăяр—1 тенкĕ,
2. Помидор (симĕсси)—1 тенкĕ,
3. Помидор (пиçме пуçлани)—1 тенкĕ те 50 пус,
4. Помидор (хĕрлĕ)—2 тенкĕ.
5. Купăста (кая юлса çитĕнекенни)—30 пус.

Пахча çимĕçе тивĕçлĕ стандарт тăрăх йышăнаççĕ.

Адрес: Богдан Хмельницкий урамĕ, 1-мĕш çурт. Тел. 9-24.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 13202 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2419. Тираж 29.600 экз.